**Николай Угарин**

# ТĔПСĔР СĂПКАРИ АЧА САССИ
(драма)

*Драмăри çынсем:*

КОЛЯ – *45 çулсенчи арçын*
ВАЛЕРА – *ывăлĕ, 18 çулта*
НАДЯ – *хĕрĕ, 20 çулта*
КĔТЕРУК – *амăшĕ*
ЛИДЯ – *арăмĕн ĕмĕлки*
МАРЬЕ – *хальхи арăмĕ*
ВЕРА – *Лидян аппăшĕ*
ТАНЯ – *Надя тантăшĕ*
ЗИНА – *Таня амăшĕ*

## ПРОЛОГ.

*Ялти каçхи урам. Аякра çамрăксен хаваслă сасси илтĕнет.*

ВАЛЕРА САССИ. Таня! Эсĕ манăн! Манăн!
ТАНЯ САССИ. Хăваласа çит малтан. Тытсан санăн пулатăп.

*Таня чупса килет, ăна хăваласа – Валера та. Таня çара уран, çӳллĕ кĕлеллĕ пушмакне аллине тытнă. Валеран кĕпи шăлаварĕнчен тухса кайнă. Валера Таняна хăваласа çитет те ăна çăмăллăн йăтса илет, хăй йĕри-тавра çаврăнать.*

ВАЛЕРА. Таня! Ĕмĕтĕм эсĕ манăн, юратăвăм!
ТАНЯ. Ой, вĕçтерсе яратăн эсĕ мана, Валера!
ВАЛЕРА. Çунату пулсан вĕçсе кай, вара эпĕ те сан хыççăн çĕкленĕп.
ТАНЯ. Эпĕ çунатсăрах вĕçетĕп, сасăсăрах юрлатăп, сĕм тĕттĕм каçра та чечек çуратăп. Виçесĕр телейлĕ эпĕ сан ытамунта, Валера.

ВАЛЕРА. Манăн çакăн пек саманта ĕмĕр-ĕмĕр тăсас килет, ĕмĕр-ĕмĕр санпа уйрăлми пĕрле пулас килет. *(Ăшшăн чуптăвать.)*

*Аякра çамрăксем кулни илтĕнет.*

ТАНЯ. Çамрăксем килеççĕ. *(Васкаса пушмакне тăхăнать.)* Кĕпӳне шăлавару ăшне чик, атту тем шутлĕç.
ВАЛЕРА. Вăл санран чиктересшĕн, эсĕ ман çумма сĕртĕнессе кĕтет. Вара сан аллупа манăн ӳт пĕрлешеççĕ те, асамлă туйăм юн тымарĕсем тăрăх чĕре патне çитет, манăн юратăва тата та вăйлăрах хĕмлентерет.
ТАНЯ. Куççем пĕрлешеççĕ, алăсем пĕрлешеççĕ, ӳтсем пĕрлешеççĕ, юнсем... Валера, эсĕ мана пăрахмăн-и?
ВАЛЕРА. Пăрахатăп çара кайсан икĕ çулталăка.
ТАНЯ. Хăратăп эпĕ.
ВАЛЕРА. Ан хăра, пирĕштийĕм манăн. Нихăçан та пăрахмастăп эпĕ сана. Ху çеç мана шăвхăртса ан хăвар. Атту паян танцире сиссе те юлаймарăм, Володька сана çаклатса та кайнă. Пăхатăп та, илтереç кăна ташша.
ТАНЯ *(кулса).* Çывăрса ан тăр çав, атту халĕ те куç умĕнчех çухатăн. *(Ахăлтатса кулса чупса каять.)*
ВАЛЕРА *(ăна хăваласа).* Çухатмастăп! Куç умĕнчен те ямастăп эпĕ сана, Таня!

*Тухса каяççĕ.*

***Çутă сӳнет.***

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ.

1 КАРТИНА. ***Кĕтерук пурăнакан çурт. Кунта вăрăм сĕтелсем, вăрăм сакăсем, турăш кĕтесси пур. Стена çинче Лидян пысăклатнă сăнӳкерчĕкĕ çакăнса тăрать, вăл кударах ӳкнĕ. Сĕтел çинче темĕн чухлĕ апат-çимĕç турилккисем. Кĕтерук вĕсене вырнаçтарса хурать. Надя тепĕр пӳлĕмрен юрласа кĕрет те Кĕтерука пырса ыталать.***

НАДЯ. Асанне!..
КĔТЕРУК. Ирех ан юрла-ха, хĕрĕм. Ир юрлакан каç макăрнă тетчĕç ĕлĕк.

НАДЯ. Савăнăçа ниçта шăнăçтараймастăп эпĕ, асанне. Чунра питĕ ырă, хама юмахри пек туятăп. Утса çӳренĕ чухнех тĕлĕкри пек куçа тем те курăнать. Çуллахи ăшă кун çаран çинчи чечексем хушшинче çӳренĕн туйăнать, Алешапа çав чечексем хушшинче йăваланнăн туйăнать. Путене сассине илтетĕп эпĕ, вăштăр çил вĕрнине, чечексем пĕр-пĕринпе калаçнине, Алешан чĕри таппине илтетĕп. Пĕлесчĕ санăн, асанне, мĕн тери телейлĕ эпĕ. Паянтан хамăн юратнă çынпа пулатăп, ĕмĕр тăршшĕпех, мĕн виличчен.

КĔТЕРУК. Ăнланатăп эпĕ сан туйăмна. Çамрăк чухне эпĕ хам та ĕмĕтленме юрататтăм. Халĕ эсир, çамрăксем, пĕр-пĕрне юратса качча каятăр, хăвăр ирĕкĕрпе. Пирĕн чухне вăл хĕр куççульпе çăвăнса качча тухнă. Эпĕ хам та çавах. Пĕррехинче аслаçу килсе кĕчĕ те пирĕн патăмăра, аллинче – пăшал: «Е халех манпа пыратăн, е çакăнтах персе пăрахатăп»,- терĕ. Вилес килмерĕ те йĕре-йĕрех хыçĕнчен утрăм вара. *(Кулаççĕ.)* Петĕре кăмăллатăп эпĕ. Ывăлĕ те ашшĕне хывнă пулсан, телейӳ пулĕ-ха.

НАДЯ. Тепĕр енчен хурлăхлă та: тăван килтен ют киле каятăп. *(Кĕтерук куçне шăлса илет.)* Мĕн пулчĕ, асанне, йĕместĕн пулĕ те?

КĔТЕРУК. Хĕпĕртенипе эпĕ, хĕрĕм. Ӳссе çитĕнтĕр, çын пултăр, халь, ак, килтен каятăр. Туй хыççăн, хăть ăçта пурăнсан та, мана, асаннĕре, ан пăрахăр ĕнтĕ, килкелесех çӳрĕр. Манăн вĕт шанчăк та сирĕн çинче çеç.

НАДЯ. Нихăçан та пăрахмастпăр сана, асанне, ан кулян. Эпĕ качча каятăп, ман вырăна Валерка, ак, авланать те кин илсе килет.

КĔТЕРУК. Тем пекехчĕ те вĕт ун пек пулсан. Килеймерĕ-и-ха вăл?

НАДЯ. Çук, килет пуль ĕнтĕ, мотоциклпа хăвăрт çаврăнать вăл, путса кăна ан лартăр. Вăл кайнă чух çанталăк мĕнле уяр тăратчĕ, халĕ, ав, çумăр пĕрĕхме пуçларĕ, çулсем шывлансах ларчĕç.

КĔТЕРУК. Хĕрĕ пур пулсан салтака кайиччен авланса хăварсан юратчĕ те, мана та йăпанмалăх çын пулать. Атту вăл салтака кайсан темле пурăнмалла ĕнтĕ ман, çавăншăн халех чун хăрать.

НАДЯ. Каччă хĕрсĕр мар ĕнтĕ. Хĕрĕ пур унăн, кӳршĕ ялтан. Эпĕ ăна хамăн хĕр çумĕ турăм. Паян килсен паллашатăн акă. Ун амăшне суккăр Зина теççĕ.
КĔТЕРУК *(хăраса).* Кам? Суккăр Зина тетĕн-и?
НАДЯ. Аха, çавсен Тани.
КĔТЕРУК. Тур çырлах, инкек аякра тăмасть иккен пиртен. Тĕнчере урăх хĕр çук-шим ун валли?
НАДЯ. Ма ун пек калатăн, асанне? Лайăх хĕрех-çке вăл.
КĔТЕРУК. Хĕрĕ лайăх пуль те-ха, анчах... Ан çыхланăр вĕсемпе, ачамсем. Капла та мĕн пысăкĕш хуйхă кӳчĕ вăл Зина пирĕн киле.
НАДЯ. Мĕн калаçатăн эсĕ, асанне? Мĕнле хуйхă? *(Урамра мотоцикл килсе чарăннă сасă илтĕнет. Кантăкран пăхса.)* Валерка çитрĕ.
КĔТЕРУК. Пĕчченех-и?
НАДЯ. Пĕчченех. Асанне, кала-ха...
КĔТЕРУК. Чим-ха, хĕрĕм, çакăнта ларам-ха. *(Сакă çине ларать.)* Ура вăйĕ пĕтсе килчĕ.
НАДЯ. Асанне...
КĔТЕРУК. Урăх чух, хĕрĕм. Паян ун çинчен аса илер мар.
НАДЯ. Ку аннепе çыхăннă-и?
КĔТЕРУК. Çук-çук. Вара Зина ун пек пулнăшăн хĕрĕ айăплă мар ĕнтĕ.
НАДЯ. Çĕркĕ эпĕ тĕлĕкре аннене куртăм.
КĔТЕРУК. Аннĕне?
НАДЯ. Крыльца енчи кантăкран шаккаççĕ пек. Пырса пăхрăм та – анне тăрать. Шап-шурă тумпа хăй, вăрăм çивĕтпе. Хăй пĕчĕк ача чăркаса йăтнă пек, ачи питĕ макăрать пек. «Ача валли ĕмкĕчĕ тума пĕремĕк пар-ха»,- тесе ыйтрĕ пек манран. Эпĕ тĕпеле пĕремĕк илме кайрăм, килнĕ çĕре никам та çук.
КĔТЕРУК. Асăннă чухне каллех ачи пирки манса кайрăмăр пуль. Варахпа ӳркенмесĕрех Валеркапа масар çине кайса аннĕр тăпри çине кучченеç хурăр. Ак çак, анне, сан валли, ак çак ачу валли тесе ятарласа хурăр. Эпĕ хатĕрлесе хурăп илсе каймаллисене.
НАДЯ. Ун ачин макăрнă сасси хăлхаран ниепле те кая пĕлмест. Эпĕ ача ун пек йĕнине нихăçан та илтмен. Темле чуна çав тери çӳçентерекен, чĕрене çурса яракан сасă.

ВАЛЕРА *(кĕрет).* Веçех вараланса пĕтрĕм, пыльчăк сирпĕнет çеç. Ку çумăра пула мотоцикл йăпăр-япăр çеç пырать, темиçе хут хама çавăрса çапатчĕ.
КĔТЕРУК. Çанталăкĕ тем пăсăлса кайрĕ, пĕрре те уяртассăн туйăнмасть.
ВАЛЕРА. Тип çырма урлă хывнă кĕпер питĕ япăхлансах кайнă, чутах аяла сирпĕнеттĕм. Аялалла пăхрăм та, куç-пуç алчăрасах кайрĕ.
КĔТЕРУК. Ху валли пĕрре тупан-ха çапла. Çӳлти касăпа килмеллеччĕ. Хăратса çеç тăран мана.
ВАЛЕРА. Çумăр çунă хыççăн унти лачака урлă тракторпа сĕтĕрмесĕр те тухаймастăн. Кунта хăть кĕпер урлă каççан, çул айккипе çерем. Пĕр вырăнта çеç машина иртсе çӳреме тăвăрланнă, çыранĕ татах ишĕлнĕ. Алешана каламаллаччĕ, ял тăрăх çаврăннă чухне тип çырма урлă ан çӳреччĕр.
КĔТЕРУК. Ялти çын каламасăрах пĕлмелле ĕнтĕ.
НАДЯ. Пурне те чĕнсе çаврăнтăна?
ВАЛЕРА. Пурне те. Пурте килетпĕр терĕç: куккасем те, мăнаккасем те. Каярахпа машинапах тиенсе килеççĕ.
НАДЯ. Кукамая куртăн-и?
ВАЛЕРА. Куртăм, акă кучченеç парса ячĕ. *(Сумкинчи япалисене кăларать.)*
НАДЯ *(япалисене илсе).* Çакăн чухлĕ-и? Мĕн кăна парса яман...
ВАЛЕРА. Ак çак кăмпине аннĕре асăнса сĕтел çине лартăр, унăн юратнă çимĕçĕ, терĕ.

*Пауза.*

КĔТЕРУК. Кукаму мĕнлерех тăрать, çӳрекелет-и?
ВАЛЕРА. Кил хушшинче чухласа çӳрекелет, анчах тепĕр куçĕ те веçех хупланса ларнă. Туй хыççăн ман пата килсе кайччĕр, терĕ сире, Надя.
НАДЯ. Хам та тунсăхласа çитрĕм ăна, тахçантанпах курман.
КĔТЕРУК. Аннĕр вилнĕ хыççăн йĕре-йĕрех суккăрланчĕ ĕнтĕ вăл. Хуйхă лайăх тумасть çав вăл. Çул çинче аçусем курăнмарĕç-и?
ВАЛЕРА *(кăмăлсăр).* Çук.
КĔТЕРУК. Ах çавăн чĕри... Мĕн туса тăрать-ши тулькка? Эрне малтан килмелле унăн.
ВАЛЕРА. Асту, хыпса ан ӳктĕр.

КĔТЕРУК. Хĕрĕ качча каять, вăл вара халь те çук. Чĕмпĕр таçта мар, куннĕн те килсе кайма пулать.

ВАЛЕРА. Пĕлсе пĕтер-ха ăна, муш вуçех килмест. Çураçнă çĕре те килмерĕ вĕт.

НАДЯ. Килĕç-ха, ирхи автобуспа килмесен, иккĕмĕшпе çитĕç.

КĔТЕРУК. Эй, тупата... Сирĕнпе калаçса кăмакари кукăльсем пирки мансах кайнă. Пичĕсем çунса ан кайччĕрех. *(Тепĕр пӳлĕме каять.)*

ВАЛЕРА. Надя, Таня миçере килет?

НАДЯ. Килмест вăл паян.

ВАЛЕРА *(хăраса).* Мĕнле килмест?

НАДЯ *(кулса).* Ой, хăраса та ӳкрĕ. Килет ĕнтĕ, килет. Мĕн, халех тунсăхласа çитрĕне? Ирех килетĕп терĕ мана пулăшма. Ма кирлĕ вăл сана?

ВАЛЕРА. Çĕркĕ вăл урама тухмарĕ.

НАДЯ. Эс ĕнтĕ ăна пĕр каç курманнипех хыпса ӳкрĕн пуль. Тухман – тĕрĕс тунă. Сире, каччăсене, хушăран çавăн пек асаплантармалла. Тунсăхласа çитсен вăйлăрах юратма пуçлатăр.

ВАЛЕРА. Эс шӳтлессипе.

НАДЯ. Ан хуйхăр, килет ĕнтĕ. Шăллĕсемпе йăмăкĕсемшĕн вăл халĕ амăшĕ вырăнĕнче. Вĕсене пăхмалла вĕт, йывăр ăна, ывăнать та пуль. Тата унăн амăшне çак кунсенче тĕрмерен кăлармалла тенĕччĕ, тен вăл килнĕ?

ВАЛЕРА. Эпир тĕл пулма калаçса татăлнăччĕ. Хăй чĕнчĕ – хăйех тухмарĕ.

НАДЯ. Валерка, эс чăнласах юрататăн-и ăна е вăхăт ирттермелле çеç çӳрен унпа?

ВАЛЕРА. Пĕлмĕше персе ан тăр-ха. Чăнласах пулман пулсан, ун пирки санран ыйтмастăмччĕ те.

НАДЯ. Вăл санран аслăрах-çке.

ВАЛЕРА. Эп те сăнпа çамрăках мар. Хăшĕсем çартан килнисем те манран çамрăкрах курăнаççĕ. Эпĕ аттепе анне çумĕнче ӳсмен, пурнăç ирĕксĕрех ватăлтарать. Хăш чух пĕчĕк ача пек ĕсĕклесе йĕрес килет, анчах та чăтмалла, шăла çыртса та пулин чăтмалла. Ыттисен ачисем теплицăри чечексем пек çитĕнеççĕ, эпир çеç...

НАДЯ. Таня мана та килĕшет, хамăн тăван йăмăк пекех вăл маншăн. Анчах та асанне...

*Таня кĕрет. Унăн пĕр аллинче зонтик, тепринче – сумка.*

ТАНЯ. Салам, Надюша.
НАДЯ. Таня! *(Таняна пырса ыталать.)* Салам.
ТАНЯ. Эсĕ мана кĕтсе ывăнтăн пулĕ. Паçăрах килесшĕнччĕ, ниепле те килтен пушанса тухаймарăм.
НАДЯ. Çылăхсăр эсĕ, сăмах çинех çитрĕн. Халь çеç сан çинчен калаçаттăмăр.
ТАНЯ. Кампа?
ВАЛЕРА. Здравствуй, Таня.
ТАНЯ *(пуçне пĕксе).* Салам.
ВАЛЕРА. Таня...
ТАНЯ *(сумкинчен фужерсем кăларса Надяна парать).* Акă эсĕ ыйтнă фужерсем, килĕшеççĕ-и?
НАДЯ. Ой, мĕнле хитре. Чăн-чăн хрусталех-и?
ТАНЯ. Аха. Ак çак хĕрлĕ хăюпа хитрен кăна çыхса хуратпăр вĕсене, сирĕн пурнăçăр та тулли фужерсем пекех тулли, нихăçан уйрăлми пултăр. *(Сумкинчен хăю кăларса фужерсене çыхать.)*
ВАЛЕРА *(Таня патне пырса).* Таня...
ТАНЯ *(пăрăнса).* Ну, мĕн тумалла кунта санăн, Надя? Сĕтел çине майлама пуçлара пулĕ. Кунта ман кăштах кучченеç. Ăçта хурас-ши вĕсене, Надюша?
ВАЛЕРА. Таня, мĕншĕн манран пăрăнатăн? *(Таняна пырса хулĕнчен тытать.)*
ТАНЯ. Яр, Валера, аппу умĕнче намăса пĕл.
НАДЯ. Кӳр сумкуна, хамах вырнаçтаратăп. *(Танян сумкине илет.)*
ТАНЯ. Вăхăт пире кĕтмест, атя хуш, ĕçлеме пуçлар. Сисмĕпĕр те, хĕр илме кĕрлесе те çитĕç.
НАДЯ. Вĕсем киличчен-ха... Калаç ĕнтĕ унпа, атту иртенпе сан çинчен ыйтса тĕнкене илетчĕ. *(Тепĕр пӳлĕме кĕрсе каять.)*
ВАЛЕРА. Таня, мĕн пулнă сана?
ТАНЯ. Нимĕн те.
ВАЛЕРА. Эпĕ сана çĕрĕпе кĕтрĕм, эсĕ тухмарăн.
ТАНЯ. Пуç ыратрĕ.
ВАЛЕРА. Эсĕ малтан пуç ыратнине те пăхмастăнччĕ, тухаттăнччĕ.

ТАНЯ. Калаçар мар кун çинчен, Валера.
ВАЛЕРА. Мĕншĕн калаçар мар? Эпĕ сана тек кирлĕ мар-и?
ТАНЯ. Валера, тархаслатăп, нимĕн те ан ыйт.
ВАЛЕРА. Килĕрте мĕн те пулин пулчĕ-и?
ТАНЯ. Йăлăнатăп сана, ан тĕпче. Мана йывăр халĕ, манăн чăн та пуç ыратать.
ВАЛЕРА. Санăн куçусем те шыçăнса кайнă, эсĕ йĕнĕ-и?
ТАНЯ. Çук, сахал çывăрнипе вăл.
ВАЛЕРА. Эсĕ йĕнĕ. Володька каллех çулăхрĕ-и?
ТАНЯ. Çук.
ВАЛЕРА. Алешан шăллĕ пулман пулсан эпĕ ăна кĕçĕрех тăн кĕртсе илнĕ пулăттăм. Ăна пула туй илемне пăсас килмест.
ТАНЯ. Çук-çук, вăл айăплă мар.
ВАЛЕРА. Ăнах хӳтĕлетĕн. Мана çавăн пек кам та пулин хӳтĕлесчĕ. Эпĕ пĕлетĕп, вăл сан çинчен ĕмĕтленсе пурăнать, анчах та эпĕ пурпĕрех сана никама та памастăп. Атя эпир те пĕрлешетпĕр.
ТАНЯ. Çук.
ВАЛЕРА. Эпĕ салтака кайсан, эсĕ мана кĕтсе илмесрен хăратăп эпĕ. Мана çуркунне çеç илсе каяççĕ. Атя пĕрлешетпĕр, унччен çур çул та пулин пĕрле пурăнса куратпăр.
ТАНЯ. Çук.
ВАЛЕРА. Кайран сан мана икĕ çул çеç кĕтмелле пулать. Пирĕн ача çуралĕ, унпа йăпанса пурăнăн, вăхăт сисĕнмесĕрех иртсе кайĕ. Атя пĕрлешетпĕр.
ТАНЯ. Çук.
ВАЛЕРА. Çук та çук – пĕр сăмах. Эсĕ унччен ху пирĕн çулсем уйрăлса каясран хăраттăнччĕ, паян хăвах манран пăрăнатăн. Эпĕ ним те ăнланмастăп – мĕн пулнă сана?
ТАНЯ. Валера, ăнлан-ха, тархасшăн, пире пĕрлешме юрамасть. Çапла, килĕшетĕн эсĕ мана, манăн хамăн та сана çухатас килмест, анчах та эпĕ сана качча тухаймастăп. Туссем пулăпăр, пĕр-пĕрин патне хăнана çӳрĕпĕр...
ВАЛЕРА. Мĕнле тус? Мĕнле хăна?
ТАНЯ. Эсĕ манăн асăмрах пулăн. Эпĕ сана халь тин манас тесен те манаймастăп. Анчах та эпĕ санăн арăму пулма пултараймастăп, ăнлан.
ВАЛЕРА. Паллах, мĕн тăватăн эсĕ ман пеккипе. Сан хыçран аслăраххисем те сахал мар чупаççĕ. Эпĕ вара салтака та кайса

килмен, нимĕнле специальность та алла илмен. Володька вара арçын. Салтак хуйхи те çук ун, диплом та алăра. Эсĕ ăна кĕтетĕн, унпа пĕрле пулас тесе ĕмĕтленсе пурăнатăн.
ТАНЯ. Мĕнле хăятăн эсĕ мана çакăн пек калама?
ВАЛЕРА. Эп тăлăх турат çеç. Анне сăнне пачах та астумастăп, атте хӳтлĕхĕнче те пурăнса курман. Вăл та пĕр арăмĕпе те йĕркеллĕ пурăнни çук: е арăмĕсем тухса каяççĕ, е, киле кĕрсен, хăйне хăваласа кăлараççĕ. Эпĕ те атте пек пуласран хăратăн эсĕ.
ТАНЯ. Çук, эсĕ лайăх çын, килĕшетĕн эсĕ мана.
ВАЛЕРА. Е кам та пулин пистерет-и сана манран?
ТАНЯ. Çук.
ВАЛЕРА. Эппин эсĕ ху тĕллĕнех. Эсĕ те ытти хĕрсем пекех. Эпĕ сана урăхла пуль тесеччĕ. Пĕрлешнĕ-пĕрлешмен хитре пӳрт-çурт кирлĕ сире, кавирсем, стенкăсем, цветной телевизор. Эпĕ вара нимсĕр. Манăн улăштарса тăхăнмалли лайăх тумсем те çук, пулăшса пыракан аттепе анне те çук - çавăнпа пăрăнатăн та эсĕ манран.
ТАНЯ. Кам вырăнне хуратăн эсĕ мана?!
ВАЛЕРА. Чипер, каçсерен пырса текех сан ыйхуна татмăп.
ТАНЯ. Валера!

*Валера тепĕр пӳлĕме кĕрсе кайма тăрать, ăна хирĕç Таня тухать.*

НАДЯ. Ма кăшкăратăр эсир? *(Валерана.)* Ăçта каятăн эсĕ?
ВАЛЕРА. Пăрăн-ха эсĕ те пулин! *(Урама тухса каять.)*
НАДЯ. Валерка!.. *(Таняна.)* Мĕн пулнă ăна?
ТАНЯ. Ах, Надя... (Йĕрет.)
НАДЯ *(Валера кайнă енне.)* Çын пулать вĕт!.. Çав тери кӳрентерчĕ-и вăл сана?
ТАНЯ. Çук, вăл кӳрентермен мана. Телейсĕр хĕр эпĕ, Надя, хам юратнă çынпа та пĕрле пулаймастăп.
НАДЯ. Кам чарать вара сире пĕрле пулма? Е Валерка урăх хĕр тупса янă-и?
ТАНЯ. Çук, вăл часрах пĕрлешесшĕн, анчах та эпĕ ăна нихăçан та качча тухаймастăп.
НАДЯ. Мĕншĕн?

ТАНЯ. Эп юрататăп ăна, çав тери юрататăп, вăл та мана. Эпĕ ĕмĕр унпа пулма ĕмĕтленнĕ. Пĕррехинче, пĕр-икĕ уйăх каялла, хамăн туйăмесене те ун умĕнче тытса чараймарăм. Халĕ акă çавăншăн ӳкĕнетĕп. Манăн унран ача пулать.
НАДЯ. Ача? Эсĕ йывăр çын-и?
ТАНЯ. Аха.
НАДЯ. Апла пулсан эпĕ пушшех те ăнланмастăп: мĕншĕн пĕрлешейместĕр вара эсир? Ача пирки пĕлет-и вăл?
ТАНЯ. Çук. Ăна ан кала, ăна пĕлтермелле мар. Эп пăрахатăп ачана.
НАДЯ. Пăрахатăн? Хăвăн ачуна? Мĕн калаçатăн эсĕ? Таня, тăна кĕр! Пирвайхине пăрахсан санăн кайран ача пулмасса та пултарать. Пĕрлешĕр те, ĕçĕ те пĕтет.
ТАНЯ. Пире пĕрлешме юрамасть. Мĕнле çуратас-ха ман ăна, ашшĕсĕр ӳстĕр-и?
НАДЯ. Мĕншĕн юрамасть вара?
ТАНЯ. Халлĕхе эпĕ хам та пĕлместĕп, анчах та туятăп: манăн ĕмĕт нихăçан та пурнăçланас çук. Çĕркĕ мана атте мĕн кăна каласа вăрçмарĕ-ши, кам кăна темерĕ – аса та илес килмест. Вăл пирĕн яланах йăваш пулнă, пире нихăçан та ытлашши вăрçман, анне вăрçсан та пире хӳтĕлетчĕ. Çĕркĕ вара... Вăл такамран эпир Валерапа çӳренине пĕлнĕ, вара тытăнчĕ: «Аннӳ килсен пуçна çиет вĕт, аннӳ килсен иксĕмĕре те пĕтерет вĕт...» «Аннӳ, аннӳ, аннӳ...»
НАДЯ. Ма хирĕç пулма пултараççĕ вара вĕсем эсир туслă пулнине?
ТАНЯ. Манăн та пĕлесчĕ çав мĕншĕн иккенне. Вăл мана уçăмлăн ним те каламарĕ, анчах та сирĕн киле кин пулса килесси пирки татăклăн каларĕ: эпир Валерапа нихăçан та пĕрле пулас çук. Темĕн хирĕçтерет пирĕн çемьесене, тем пулнă вĕсен хушшинче.
НАДЯ. Çавăнпа паçăр асанне сан çинчен асăнсан...
ТАНЯ. Ман çинчен? Мĕн門 каларĕ?
НАДЯ *(тепĕр пӳлĕм енне).* Асанне! Асанне!..
ВАЛЕРА *(кĕрет).* Эсир кунтах-и? *(Урамалла.)* Мăнакка, кунта вĕсем*. (Тухасшăн.)*
ТАНЯ. Валерка, тăхта, манăн санпа калаçмалли пур.
ТАНЯ. Надя, кирлĕ мар.

ВАЛЕРА *(Таня ҫине пăхса).* Пустуй сăмах ваклама кирлӗ мар пуль, пурпӗр веҫех паллă.
НАДЯ. Эс пӗтӗмпех пӗлместӗн-ха.
ВАЛЕРА. Пӗлессӗм те килмест! *(Пăрăнса кайма тăрать, Вера кӗнипе чарăнать те сакă ҫине тăсăлса выртать.)*

*Тепӗр пӳлӗмрен Кӗтерук тухать.*

ВЕРА. Начук, хӗрӗм... *(Надяна ыталать.)*
НАДЯ. Мăнакка...
ВЕРА. Мӗнле чиперлесе кайнă эсӗ, Начук, ытармалла мар вӗт. Аванах-и, тăхлачă? *(Кӗтерука алă парать.)*
КӖТЕРУК. Аванах-ха. Мӗнле ҫитрӗн?
ВЕРА. Чиперех. Амăшӗнчен виҫҫӗре юлсан та, качча каймалăх та пулчӗ вӗт.
КӖТЕРУК. Сывă ҫын ҫитӗнет, вилни ҫеҫ ҫӗрет.
ВЕРА. Тумтире хывам-ха.
КӖТЕРУК. Кăмака ҫине сарса хур, часрах типет.

*Кӗтерукпа Вера тепӗр пӳлӗме каяҫҫӗ.*

НАДЯ. Таня, манăн сана та, Валеркана та телейлӗ тăвас килет. Кала та ăна тӗрӗссине, вара иксӗре те ҫăмăлрах пулать.
ТАНЯ. Ҫук, ун пек мана тата та йывăртарах пулать. Нимӗн те ан пӗлтӗр вăл.
НАДЯ. Эсӗ ухмахла шухăш тытнă. Каҫар та, эпӗ санпа килӗшме пултараймастăп.
ТАНЯ. Надя, чарăн!
НАДЯ *(Валерана чышса).* Ну-ка тăр! Пăх-ха ăна, тăсăлса выртнă.
ВАЛЕРА. Мӗнле кун паян - пӗрин хыҫҫăн тепри хирӗҫет. *(Урама тухса каясшăн.)*
НАДЯ. Мана итлесе пӗтермесӗр ниҫта та каймастăн эсӗ!
ВАЛЕРА. Пăрăн-ха кунтан!
НАДЯ. Ҫук, пăрăнмастăп! Лар ак ҫакăнта! *(Сакă ҫине чышса лартать.)* Ӗҫне тума пӗлтӗн пулсан, итлеме те пӗл. *(Урăх сасăпа.)* Валерка, эпир санпа мӗн пӗчӗкрен тăлăх ӳснӗ. Анне чӗрки ҫинче те ҫителӗклӗ ларман, вăл пӗҫернӗ ҫăкăра та ҫисех курман, хамăр хуйха-суйха та унпа пайласа курман. Эпир мӗн

пĕчĕкрен тăлăх ача шăпи мĕн тери йывăр пулнине пĕлсе ӳснĕ. Çавăнпа та эсĕ Таняна кӳрентерме пултараймастăн. Енчен те анне çак самантра эсĕ Таняран пăраннине курнă пулсан, вăл сана вăрçнă пулĕччĕ. Сан ăна пулăшса пымалла, ăна йывăр халĕ.

ВАЛЕРА. Мана та çăмăл мар.

НАДЯ. Вăл ача кĕтет.

ВАЛЕРА *(тĕлĕнсе).* Мĕн? Ача? Авă мĕншĕн эсĕ мана качча тухасшăн мар иккен. Ну, мĕнех, саламлатăп.

НАДЯ. Мĕн шăл йĕретĕн? Вăл санран ача кĕтет.

ВАЛЕРА. Манран? Апла пулсан эпĕ пушшех те ăнланма пултараймастăп: мĕншĕн качча тухасшăн мар вара эсĕ мана, Таня?

*Кĕтерукпа Вера апат-çимĕç турилккисем йăтса килсе, вĕсене сĕтел çине вырнаçтарса хураççĕ.*

ВЕРА. Сана тавтапуç ĕнтĕ, тăхлачă, ачасене пăхса ӳстертĕн, пăрахмарăн.

КĔТЕРУК. Пĕчĕкренех пăхнипе хам çуратнă ачасем пекех вĕсем маншăн. Халĕ акă саланма пуçларĕç. Пĕччен тăрса юлăп-ха çапла.

ВАЛЕРА. Аннӳн хăйĕнех çитĕнтерсе качча памаллаччĕ те вĕт, пулмарĕ.

КĔТЕРУК. Нуши туртнă ĕнтĕ, вилĕмĕ сĕтĕрнĕ.

ВАЛЕРА. Шофер правине илсе машина çине ларам çеç, таптаса вĕлеретĕп эпĕ вăл тухтăрне.

КĔТЕРУК. Каллех эс хăвăнне!

ВАЛЕРА. Мĕншĕн çăлса хăварман вăл аннене, мĕншĕн вĕлернĕ?!

КĔТЕРУК. Çамрăклăхна тĕрмере ирттерессӳ килет-и?

ВЕРА. Йăнăш çĕрте шыратăн эсĕ айăпне, йăнăш çĕрте.

ВАЛЕРА. Кам-ха вара айăпли?

*Коляпа Марье кĕреççĕ. Марье аллисене сумкасем тытнă.*

КОЛЯ. Фу, ку лачака тăрăх утса пĕтĕм хал пĕтрĕ. Валерка, кĕтсе илме пыраççĕ ĕнтĕ ăна. Ну, Надюша, хĕрĕм, кил-ха пĕрре ыталасах илем. Саламлатăп сана.

МАРЬЕ *(алă парса).* Начук, телейӳ пысăк пултăр.
НАДЯ. Тавтапуç.
КОЛЯ. Акă кур, Марье, мĕнешкел ӳстерсе çитĕнтертĕм эпĕ ачасене. Пăхсан ăмсанса тăмалла вĕт.
МАРЬЕ. Çамрăксене те ăмасанмасан... Вĕсен веçех малашĕ, пирĕн çеç каяшĕ.
КОЛЯ. Çук, халех ватăлма шутламастăп-ха эпĕ. Мăнуксене те учикка сиктересчĕ-ха, э? *(Вера патне пырса.)* Марье, аннепе ачасене эсĕ паллатăн, аккана вара курман. Ку, ак, Лидян акăшĕ – Векакка. Ку ман арăм пулать – Марье.
МАРЬЕ *(Верана алă парса).* Аван-и?
ВЕРА. Аванах-ха.
КОЛЯ *(Лидян сăнӳкерчĕкĕ патне пырса).* Эх, Лидя, мĕн тума вилсе выртрăн-ши? Паян акă савăнса хĕре качча панă пулăттамăр.
МАРЬЕ. Иртнинче килсен Лидян тăванĕсемпе паллашма илсе кай-ха терĕм те, хускалмарĕ.
КОЛЯ. Вăхăт пулмарĕ вĕт.
МАРЬЕ. Юрать халь паллашрăмăр. Атту çул çинче тĕл пулсан та пĕрне-пĕри паллас çук.
КОЛЯ *(Таняна тĕмсĕлсе пăхса).* Такама аса илтерен, ниепле те пуçа пырса кĕмест.
ТАНЯ. Эпĕ сирĕн ялтан мар, кӳршĕ ялтан.
МАРЬЕ. Ман тем темелле ĕнтĕ, пĕр танлисем пекех те. Акка тесен...
ВЕРА. Ятран чĕнсен те кӳренместĕп эпĕ.
МАРЬЕ. Юрĕ эппин, Вера тейĕп.
КОЛЯ. Çук, Марье, эпĕ акка теп пулсан, эсĕ те акка те. Акка вăл хамăр çын, хисеплетĕп эпĕ ăна. Атя, Марье, кучченеçсене кăлар, курччĕр, пуш алăпа çӳреместпĕр эпир. *(Валерана.)* Ну, мĕнле пурăнатăн-ха? Тăсланкă пулса кайнă, аçу патне пырса та пăхмастăн. Эпĕ сире манмастăп, эсир вара мана манса та кайнă пулас.
ВАЛЕРА. Тавтапуç, çулталăкне пĕр-икĕ хутчен килсе каян.
КОЛЯ. Надюш хăть пыркаласа кайрĕ, эсĕ вара - çук. Юрĕ-çке, юрĕ. Аннĕне пырса алă пар.
ВАЛЕРА. Манăн темиçе анне мар, пĕр анне кăна. Сан арăмусене пурне те анне тесе пĕтерсен...
КОЛЯ. Шӳтлет. Хама хунă.

ВЕРА *(Марьене).* Иксӗр кӑна пурӑнатӑр-и, ачасемпе-и?
МАРЬЕ. Килте виççӗн: хамӑр та кӗçӗн ывӑл, вӑл кӑçал шкул пӗтерет. Капла ачасем пиллӗк тан ман. Хӑшӗсем авланса качча та кайрӗç.
ВЕРА. Вӗсене илсе килмерӗр-и тата?
МАРЬЕ. Килтине выльӑхсем пӑхма хӑвартӑмӑр. Кӗçӗн кин ача çуратнӑ та, килеймерӗç. Ыттисем аякра пурӑнаççӗ.
КОЛЯ *(Таняна).* Петӗркке Ваççин мар пуль те?
ТАНЯ. Çук.
КӖТЕРУК. Начук, аçусем çул çинче выçнӑ пуль. Яшка пиçнӗ, антарса пар.
МАРЬЕ. Пирӗншӗн ан тертленӗр, çисе тухнӑччӗ эпир.
КӖТЕРУК. Аякран килетӗр вӗт, çул выçтарать вӑл.
КОЛЯ. Уй урлӑ каçсан хырӑм выçать вӑл. Марье, атя лар, пиçнӗ яшкана вӑхӑтра çимелле ӑна. Ну-ка, хӗрӗм, хӑнала-ха аçупа аннӳне. Пӑхар-ха, хӑна тума пӗлетӗн-и эсӗ? Качча кайсан тем тума та пӗлмелле вӗт. Валерка, эсӗ халӗ кил хуçи. Атя, апат анмалӑх ярса пар пӗрер черкке.
ВАЛЕРА. Эрехӗ пырна ларасран хӑратӑп.
КОЛЯ. Каллех шӳтлет. Маттур, ывӑлӑм.
ВЕРА. Валерка, тирпейлӗрех калаç.
КОЛЯ. Эсӗ, ак, ӑна анне тесшӗн мар. Сире çуратман пулсан та, унӑн та сирӗншӗн чӗри ыратать.
МАРЬЕ. Коля, юрӗ ӗнтӗ, çукшӑн мӗн çиленмелли пур? Марьяппа теччӗр, маншӑн çавах.
КОЛЯ. Ятарласа автан пустарчӗ туйа килме тесе, тӗрлӗ тӗслӗ кукӑльсем пӗçерсе илсе килчӗ. Ӑна хучӗ, кӑна хучӗ сумкана. Тен санӑн мана та атте тес килмест, а?
НАДЯ. Атте, атя леш пӳрте, яшка антарса паратӑп.
КОЛЯ. Çиен кунта сирӗнпе! Яшка мар, килнӗ-килмен тимӗр пӑрçа çитеретӗр.
КӖТЕРУК. Ачамсем, чарӑнӑр. Шӑв-шав ан тӑвӑр, паянхи кун ним уйӑрмалли те, вӑрçӑнмалли те шырамалла мар. Туйа йӗркеллӗ ирттерсе ярар тесе шутлӑр.
КОЛЯ. Марье, кур, çакӑ ӗнтӗ вӑл манӑн ывӑл. Мӗн пӗлсе савӑнса тӑмалла тет ман, хама хӗнекен ӳссе çитӗнчӗ тесе-и?
НАДЯ. Атте, ан шавла, атьӑр çиме. Эпӗ пӗçернӗ яшкана хӑçан çисе курӑн-ха тата?

КОЛЯ. Эсĕ те çавах! Хатĕрленнĕ кунта... Мансăрах качча каясшăн пултăна? Элле ытлашши вĕчĕлтетсе тăрать-и е хыçалтан пăшалпа тĕлленĕ-и? Ниçта кайма çукваскатăр. Качча каять имĕш, арçын кирлĕ пулнă ăна.
МАРЬЕ. Куля...
КĔТЕРУК. Куля, мĕн калаçатăн,ачам?
КОЛЯ. Мансăрах çураçнă, мансăрах качча каясшăнччĕ пуль ĕнтĕ. *(Вера çине пăхса.)* Атаманĕ те кунтах. Эсĕ вĕсене мана хирĕç вĕслетсе пурăнатăн, эсĕ пур çĕре те сăмсуна чикетĕн. Сан ачусем мар вĕсем, манăн.
ВАЛЕРА. Мăнаккана тата мĕн те пулин калан пулсан, халех кăларса яратăп сана кунтан.
КОЛЯ. Ха, ку кăна çитменччĕ! Марье, кур-ха, кур, мана тăван ывăл тăван килтен хăвалать. Ăçта пулнă кун пекки? Вăт мĕнле тав тăваççĕ вĕсем ашшĕне ӳстерсе çитĕнтернĕшĕн.
ВАЛЕРА. Эсех пăхса çитĕнтертĕн пуль.
КОЛЯ. Тата кам пăхнă сире? Аннӳ вилчĕ те, унăн ĕçĕ пĕтрĕ, эпĕ вара... Мăнаку пăхса çитĕнтерчĕ-и? Вăл сире иксĕре те ача çуртне ăсатасшăнччĕ.
ВЕРА. Мĕн калаçатăн, кĕрӳ? Хăçан каланă эпĕ ун пек?
КОЛЯ. Во-во, тĕрĕсси куçна кĕрет-и? Çапла çав, тĕрĕс сăмах шăртлă вăл. Йĕркеллĕ çын ачине качча кайсассăн юрĕччĕ. Мĕн шутлатăн эсĕ ак çак пуçупа?
НАДЯ. Вĕсем лайăх çынсемех.
КОЛЯ. Лайăх пулнăран арăмĕ ĕçке ернĕччĕ-и пĕр вăхăт? Халĕ, ав, пульницаран тухаймасть, чире ернĕ. Кун кăтартман вăл ăна. Ывăлĕ те, ак, сан пуçна çийĕ.
НАДЯ. Атте, ан хăй вĕсем çинчен киревсĕр калаçма. Юрататăп эпĕ Алешана.
ВАЛЕРА. Атте, ырăпа килтĕн пулсассăн юл, усалпа çӳретĕн пулсассăн – тĕсӳ те ан пултăр сан кунта.
КОЛЯ. Эсĕ мана хăваласа ан тăр, эпĕ хамăн килте. Тупăннă паттăр! Малтан сăмсу айне шăлма вĕрен.
ВАЛЕРА. Çураçнă çĕре чĕнтĕмĕр сана, килмерĕн.
КОЛЯ. Ăçта чĕнтĕр? Хăçан чĕнтĕр? Эсир юри мансăрах çураçса хунă эпĕ хирĕç пуласран хăраса.
МАРЬЕ. Куля, вара каларăм-çке сана телеграмма...
КОЛЯ. Хуп çăварна! Миçе хутчен каламалла сана ирĕк памасăр çăвар ан уç тесе.

МАРЬЕ. Эх, мĕн тума килтĕм-ши пĕреххут?

КОЛЯ. Атя-атя, тата эсĕ тытăн, тата эсĕ хăрт мана. Упăшкăрсене çын умĕнче хăртма ай-яй маçтăр вĕт эсир.

ВАЛЕРА. Çын мар эсĕ, хăравçă, мемме, усăсăр çын.

КОЛЯ. Эсĕ ху кам? Эсĕ кама мĕн усă панă?

ВАЛЕРА. Манăн веçех малашĕ, ырă çынсене сахал мар усă кӳрĕп-ха. Эсĕ вара малашне те çакăн пек пулсан, манран уссине ан кĕт.

КОЛЯ. Паллах, мĕн туса пулăшмалла сан аçуна? Çурт туса панă сана...

ВАЛЕРА. Сан çурту мар! Ытларах анне вăйĕпе çĕкленнĕ çурт ку. Асанне, кала.

КĔТЕРУК. Ачамсем, чарăнăр! Эх, Куля, пуçна йăлтах çухатнă пулас эсĕ. Сан ачусем çынна юрăхлă пулнăшăн савăнса тăмалла, эсĕ вара... Петĕрсем пĕрре те пăсăклă çынсем мар, сан хĕпĕртесе тăмалла Начук вăл киле кайнăшăн.

КОЛЯ. Курăпăр-ха мĕнле савăнтарĕç вĕсем ашшĕне. Юрĕ, тепĕр тесен манăн мар, хăвăн пурăнмалла. Аçун сăмахне сахал мар аса илĕн-ха.

КĔТЕРУК. Ху арăмусем патĕнчен килсе те пăхмастăн вĕт пире. «Анне, хĕл мĕнле каçăн, пӳрт ăшăтмалăх вутту пур-и?»- тесе пĕрре те пулин килсе каларăна? Валерка сан вырăнна çамрăклах пилĕкне авать вĕт. Каникулта виççĕмĕш çул çăвĕпе комбайн çинче ĕçлерĕ. Тыррине те илсе килчĕ, укçине те. Тумланас вырăнне, ĕçлесе илнĕ укçипе хĕл валли вутă кӳрсе хатĕрлерĕ.

КОЛЯ. Маттур, çавăн пек пулмалла та ăна. Кил хуçи пулсан, кил хуçи вырăнĕнче пултăр, ашшĕ килсе туса парасса ан кĕттĕр. Юрĕ, ман канас килет, пĕр вăй юлмарĕ. Пĕрер черкке ярам-ха. *(Сĕтел çинчен эрех кĕленчи илсе черккене ярать.)*

ВАЛЕРА. Атте тетересшĕн хăвна, ху эрехне те çын кучченеçне ĕçетĕн.

КОЛЯ. Эпĕ мĕн кучченеççĕр килнĕ-и? *(Сумкине илсе унтан хĕрлĕ эрех кĕленчи кăларать.)* Ак çак мĕскер вăл?

ВАЛЕРА. Санпа калаçса тăриччен... *(Тухса каять.)*

*Урамра машина килсе чарăннă сасă тата ун сигналĕ илтĕнет.*

КОЛЯ *(кантăкран пăхса).* О, кама куратăп! Федя-çке ку, ман ĕлĕкхи юлташ. Колхозра машинапа пĕрле ĕçлеттĕмĕр унпа. *(Урамалла кăшкăрса.)* Тухатăп! Тухатăп! *(Эрех кĕленчипе черкке илсе тухса каять.)*

МАРЬЕ. Каçарăр ĕнтĕ эсир пире, кучченеçсем те çителĕклĕ илсе килеймерĕмĕр. Тем те хатĕрлесе хунăччĕ: эрехне те ещĕкĕпех, кин торт та пĕçерсе пачĕ. Ним те илтермерĕ. Пуш алăпа тенĕ пек илсе килчĕ мана кунта.

КĔТЕРУК. Путлĕ çын пулмарĕ ĕнтĕ вăл. Эх, кин, мĕнле кăна чăтса пурнатăн-ши эсĕ унпа?

МАРЬЕ. Килте шăпăртах вăл, ывăлсем ăна шавлаттармаççĕ. Начук, хам çуратман пулсан та, тăван хĕр вырăнĕнчех эсĕ мана. *(Укçа кăларать.)* Пуçтарса хур-ха çакна. Нумаях пулмасан та, кăшт пулăш пулĕ.

НАДЯ. Çук, мана нимĕн те кирлĕ мар. Килнĕшĕн тав.

МАРЬЕ. Тыт-тыт, пеххил укçи панă чухне те шеллесе партарĕ вăл. Аçу курман чухне ил. Мана хама та намăс уншăн. Ырă сунса паратăп, усал сунса мар.

НАДЯ *(укçине илсе).* Тавтапуç эппин.

ТАНЯ *(кантăкран пăхса).* Туй машини пулас ку, хăюсемпе мĕнле илемлетнĕ ăна.

НАДЯ. Çак машинапа илсе каять-ши мана Алеша?

ВЕРА. Эх, çав кĕрĕве! Хăй ĕçни çитмест, çынна та хистесех ĕçтерет. Авари тутарасшăн-ши? Лешĕ те вĕт тĕппипех ĕçсе ячĕ.

КĔТЕРУК. Валеркана каламаллаччĕ эрехне туртса илтĕр.

ВЕРА. Туй ларсан ĕçмесĕр юласран хăраççĕ пуль çав.

*Кĕтерук, Марье, Надя урама тухса каяççĕ. Вера та тухасшăн пулать, ăна Таня чарать.*

ТАНЯ. Веракка, тăхта-ха. Ман санран ыйтса пĕлмелли пур.

ВЕРА. Мĕн çинчен?

ТАНЯ. Надян ашшĕпе амăшĕ çинчен тата хамăн аттепе анне çинчен.

ВЕРА. Мĕн пĕлесшĕн вара эсĕ вĕсем çинчен?

ТАНЯ. Кала-ха мана пĕр тунмасăр: мĕн çыхăнтарать вĕсене, мĕн уйăрать? Мĕн пулнă ĕлĕк, эпир пĕчĕк чух, Веракка?

ВЕРА. Тăхта-ха эсĕ, Таня, эпĕ тем ăнланаймарăм-ха.

ТАНЯ. Йăлăнатăп сана, каласа пар мана, эс пĕлмелле. Мĕн тунă пирĕн анне вĕсене?

ВЕРА. Нимĕн те туман-çке. Эпĕ нимĕн те пĕлместĕп. Сан аннӳпе Лидя мĕн ачаран туслă пулнă, мĕн пулма пултартăр вĕсен хушшинче? Сана такам юри элек сăмах каланă пуль.

ТАНЯ. Çук, ку элек сăмахпа çыхăнман, кунта мĕн -тĕр урăххи. кала-ха, мĕнле вилнĕ Надясен амăшĕ?

ВЕРА. Лидя-и? Лидя вăл пульницара ача çуратнă чухне вилнĕ. Е сана кам та пулин урăхла каласа пачĕ-и? Кам мĕн аларĕ?

ТАНЯ. Атте каларĕ.

ВЕРА. Аçу?

ТАНЯ. Эпир Валерапа туслă. Вăл кун пирки пĕлнĕ те, вара тӳрех урса кайрĕ.

ВЕРА. Мĕн терĕ вăл сана?

ТАНЯ. Эпир вĕсемпе нихăçан та тăванлă пулма пултараймастпăр, терĕ. Веракка, кала-ха, мĕн пулнă ĕлĕк?

ВЕРА. Эпĕ чăн та пĕлместĕп. Тен хăçан та пулсан кĕрӳпе хирĕçнĕ пуль. Пурне те мана пĕлтермеç ĕнтĕ, пурнăçра тем те пулать те.

*Валерапа Надя тата Марьепе Кĕтерук Коляна илсе кĕреççĕ.*

КОЛЯ. Мĕнле çынсем эсир, юлташпа та калаçтармастăр.

КĔТЕРУК. Эрехсĕр калаçма çăвар уçăлмасть-и-ха вăл? Туйра, ак, хăть те мĕн чух калаçăр.

ВАЛЕРА. Хăвăн ĕçессӳ килсен, лар та ĕç, туй машинин шоферне ан ĕçтер.

КОЛЯ. Ик черкке ĕçнипе мĕн пулать? Кунта ГАИ-сем çук.

ВАЛЕРА. ГАИ-нче ĕç тăмасть, çын турттармалла унăн. Çанталăкĕ те çанталăк мар, сулăнчăксенче асăрханмасан машинуна та çавăрса çапать.

КОЛЯ. Эс мана вĕрентсе ан тăр, эп çичĕ çул машинапа ĕçленĕ. Аннӳ правана çунтарса яман пулсан, паян кунччен те ĕçленĕ пулăттăм.

КĔТЕРУК. Çитĕ сире тавлашса! Çаплипех кăнтăрла çитет. Пуçтарăнса аннĕр патне масар çине кайса килмеллеччĕ сирĕн, ачамсем. Начук, ав, тĕлĕкре те куртăм, тет.

КОЛЯ. Вăт ку ăслă шухăш. Лидя патне манăн та кайса килмелле.

ВАЛЕРА. Эпир хамăрах кайса килетпĕр. Эсĕ выртса çывăр, туй киличчен уçăл кăштах.

КОЛЯ. Масар çине те кайма юрамасть иккен манăн. Унта та мана уйăрса хăвараççĕ. Мĕн тума юрать вара манăн, пурăнма юрать-и хăть?

МАРЬЕ. Куля, ан кăшкăр, никам та хăлхасăр мар. Кайса килчĕр ĕнтĕ хăйсем çеç, вĕсем хăвăрт утаççĕ. Эпир санпа туй хыççăн кайса килĕпĕр.

КОЛЯ. Мĕн йăпатса тăратăн эс мана? Вĕсем мана юри илсе каясшăн мар. Пĕри те юратмаççĕ мана, калăн тискер кайăк эпĕ. Эпĕ тискер кайăк мар, манăн та чун пур. Эпĕ юратнă аннĕре, алă çинче йăтса çӳременни кăна. Анне, кала, çапла мар-и-ха?

ВЕРА *(хăй тĕллĕн).* Çын умĕнче çапла ĕнтĕ, малтан...

КОЛЯ. Ну, мĕншĕн çуратасшăн пулман эсĕ виççĕмĕшне, пуçа ниепле те шăнăçтараймастăп. Ăнмарĕ манăн пурнăç. Пирвайхи арăм ик уйăхранах уйрăлса кайрĕ. Лидя,ав, вилсе выртрĕ. Кайран Настя ман тĕле лекрĕ. Вăл ачасене пăхасшăн пулманнипе ку килте пурăнас темерĕ, мана хăй патне илсе кайрĕ. Ун патĕнче пурăнам пекки турăм. *(Марье çине кăтартса.)* Халĕ санпа пурăнатăп акă. Кам эсĕ маншăн, арăм-и? Çук, эсĕ пĕрле пурăнакан хĕрарăм çеç. Лидя вара – манăн тăван арăм, мăшăрăм, чи юратни, чи хакли. Эсир виççĕр те пĕр Лидяна тăмастăр.

МАРЬЕ. Эпĕ унран лайăх тесе каламарăм вĕт сана.

КОЛЯ. Лидя вăл Лидя! *(Кăкăрне шаккаса.)* Ак çакăнтан нихăçан та тухмасть вăл, виличчен те тухмасть. Эсĕ мĕн ман çинчен шутласа пурăнатăн-и? Çук, ман çинче мар, вилнĕ упăшку çинче сан шухăшу. Эпĕ сана хуçалăхна тытса пыма кăна кирлĕ тата выльăхусене пăхма.

МАРЬЕ. Выльăхсене эсĕ çеç мар, эпĕ те пăхатăп-çке.

КОЛЯ. Илсе тултартăн пĕр картиш выльăх. Малтан пĕр ĕне те икĕ сурăх çеçчĕ. Халĕ мĕн чухлĕ? Сан выльăхусене пула ачасене килсе кураймастăп.

МАРЬЕ. Ху кунта чун туртмасть теттĕн вĕт. Хам миçе хутчен хускатса сана кунта илсе килесшĕнччĕ, итлемерĕн. Халĕ манах айăплан. Атя, кĕрсе вырт-ха пĕреххут.

КОЛЯ. Эсĕ мана çывăрттарассишĕн ан тăрăш. Мана çывăрттарса ярса ман çинчен элеклесе парасшăн-и? Атя кала, кала миçе хутчен алă çĕкленĕ эпĕ сан çине. Акка вăл çавна çеç

кĕтсе тăрать. Е Лидя çинчен ыйтса пĕлесшĕн-и? Лидяна ан тĕкĕн! Юратнă эпĕ ăна, чунтан-вартан юратнă.

**ВЕРА.** Юратнăран çавăн пек хĕн кăтартса усрарăна?

**КОЛЯ.** Вăл та мана юратнă. Асăватăн пуль, акка, ун хыççăн нумайăн чупатчĕç. Эпĕ çураçма пырсан та пĕри сĕтĕрĕнсе пынăччĕ çав шухăшпах. Паян вара ман çав çын ывăлне хĕр парса лармалла.

**НАДЯ** (хăй тĕллĕн). Ав мĕншĕн эсĕ эп вăл киле качча кайнине хирĕç иккен.

**КОЛЯ.** Эсир пĕри те Лидяна мана качча парасшăн марччĕ. Вăл вара манах суйласа илчĕ, манах качча тухрĕ. Юратмасăрах качча тухрĕ тесшĕн-и?

**ВЕРА.** Сана качча тухса хăйĕн пуçне çирĕ ĕнтĕ, çавă пур. Çавăн пек арăма йĕркеллĕ усрамарăн та...

**КОЛЯ.** Çук вара, мана айăпласа йăнăшатăн эсĕ. Вăл вилнĕшĕн эпĕ мар, эсĕ айăплă. Эсĕ пăтратса пурăнтăн пире, халĕ те пулин ачасене манран пистеретĕн.

**ВАЛЕРА.** Атте, эпĕ сана асăрхаттартăм.

**КОЛЯ.** Атя çап эс тата аçуна, çап, атту вăйна ниçта хураймастăн вĕт. Хама хĕнеттерме çеç çуратса янă эпĕ сана. Мана мар, мăнакуна çапса лачăртаттармалла. Вăл аннĕре хырăм пăрахма янă, вăл ăс панипе çав инкек пулчĕ.

**КĔТЕРУК.** Куля, чарăн, ачам.

**КОЛЯ.** Çуратнă пулсан çитĕнетчĕç виççĕш те, ытлашши пулмасчĕç. Эсĕ вара хырăм пăрахтарса часрах пире уйăрасшăн пулнă. Мĕнех, ĕмĕтӳ пурнăçланчĕ: уйăртăн пире, ĕмĕрлĕхех уйăртăн.

**ВЕРА.** Малтан çынла усрамаллаччĕ, вилмесчĕ. «Алă çинче йăтса çӳременни кăна». Тьфу!

**КОЛЯ.** Эпир çеç мар, пурте харкашнă та, çапăçнă та. Вон, Кăвас Иван арăмĕ туррăн кун кăвак куçпа çӳретчĕ, пурпĕр уйрăлса каймарĕ.

**КĔТЕРУК.** Куля...

**КОЛЯ.** Эсĕ те айăплă, анне. Юлашки вăхăтра ялан пире хирĕçтереттĕн, ялан ял çинчи сăмаха пуçтарса çӳреттĕн. Ун патне ĕçне, пекарнăйне, кайса миçе хутчен намăслантарман эсĕ ăна юлташĕсен умĕнче. Эп вара, ӳсĕрскер, ĕненнĕ, урăххине тупса янă пуль тесе кĕвĕçнĕ. Ĕçмен пулсан та ун пек пулмасчĕ те вĕт. Веçех çак эрех турĕ! *(Эрех кĕленчине ярса*

*илет те урайне ывăтма пикенет, анчах Валерка туртса илме ĕлкĕрет.)*
НАДЯ. Атте!..
КОЛЯ. Надюш, хĕрĕм. Валерка, ывăлăм. Аннĕре эп вĕлермен, аннĕре... *(Куçĕ Таня çине ӳкет.)* Ăçта курнă теп. Мĕнле-ха эпĕ малтанах палласа илеймерĕм. Паллах... Паллах çавăн хĕрĕ, амăш сăнлах. Анчах та мĕнле майпа вăл пирĕн патăмăрта? Надюш? Валерка? Акка?
НАДЯ. Таня манăн хĕр çумĕ пулать. Мĕн тупнă эсĕ унăн çумĕнче?
ВЕРА. Кĕрӳ, турă пул! Халь мар... Халь кирлĕ мар... Халь туй... Халь вăхăт мар...
КОЛЯ. Мĕн пулса иртет кунта? Чăнлăхах-и ку е тĕлĕк çеç? Лидя, эсĕ те пулин кала-ха мана. Мĕн пăхса ларатăн ним чĕнмесĕр? Е сана лайăх-и мана çын ретĕнчен кăларнине курма, мана таптанине курма, э? Ма кулатăн эсĕ?! Ма манран кулатăн?! Ывăтатăп сана кăларса!
НАДЯ. Анне!
КĔТЕРУК. Куля!

*Коля Лидян сăнӳкерчĕкне туртса антарать те кантăкран ывăтасшăн пулать. Валерка ун аллине ярса илсе, пăрса лартать. Надя Лидян сăнӳкерчĕкне туртса илет.*

ВАЛЕРА. Ан тĕкĕн аннене! Ăна кăларса ывăтма ирĕк париччен, эпĕ малтан сана кăларса ывăтатăп. *(Чышса ярать.)* Тасал кунтан! Эсĕ пирĕн атте мар. Усал эс! Кай хăвăн çулупа. Ăçтан килтĕн, çавăнта кай, пирĕн çума ан çулăх.
КОЛЯ. Каятăп... Каятăп... Хăваламасăрах каятăп. Кирлĕ мар мана эсир пĕри те. *(Тухса каять.)*
МАРЬЕ. Куля, ăçталла эс? Куля!..*(Хыçĕнчен тухса каять.)*
НАДЯ *(Лидян сăнӳкерчĕкне хăй çумне пăчăртаса).* Анне... Аннеçĕм... Пĕртен пĕр аннеçĕм. Памастăп сана никама та. *(Тăнласа.)* Ача сасси... Илтетĕр-и, ача сасси. Тата такам сăпка юрри юрлать. Ку – анне. Ку пирĕн анне ачипе. *(Сăнӳкерчĕкне хурать те тухса каять.)*

**Çутă сӳнет.**

2 КАРТИНА. *Масар çинчи Лидян вилтăпри. Ун умне Надя кукленсе ларнă.*

**НАДЯ.** Анне, аннеçĕм! Мĕншĕн çамрăклах çĕре кĕнĕ-ши эсĕ? Тăрса лар-ха самантлăха та пулин. Манăн сана ыталас килет, сан аллун ăшшине туяс килет. Ытти хĕрсене качча кайнă чух тăван амăшĕсем пеххил параççĕ. Мана паянхи кун кам пеххил сăмахĕ калĕ, ют киле кайиччен кам мана хĕрĕм тесе пуçран ачашлĕ, ăшшăн чăмăртаса чуптăвĕ? Кирлĕ мар мана амаçурианнен пеххилĕ. Манăн санăн сассуна илтес килет, анне. Ӳссе çитрĕмĕр Валеркапа иксĕмĕр те, анчах та аттепе аннен ачашлăхне туйса кураймарăмăр. Мĕншĕн çав териех телейсĕр çуралнă-ши эпир?

*Надя çĕр çине выртса йĕрет. Лидя ĕмĕлки курăнса каять, вăл çамрăк ача чĕркесе йăтнă.*

**ЛИДЯ.** Каçар, хĕрĕм, сире пăхса çитĕнтерейменрĕм эпĕ. Чунсăр çынсен шерепине кĕрсе ӳкрĕм те, унтан çăлăнса тухма хал çитерейменрĕм. Чăт, хĕрĕм, чăт. Сире те телейлĕ тăваймарăм, хамăн та телей нумая пымарĕ. Телейе мĕнле виçепе виçмеллине пĕлейменрĕмĕр пуль, çавăнпа пире йăтса тăрайми асап çеç уйăрса пачĕç пуль. Чăт, хĕрĕм, чăт. Хăвăн шăпунтан аякка тараймăн, турă çырнинчен иртеймĕн. *(Надя енне аллине тăсса.)* Тăр, хĕрĕм, сивĕ çĕр çинче ан вырт, шăнса пăсăлăн, çĕр туртать вăл.

*Надя ура çине тăрать. Лидя ерипен хыçалалла чакать.*

**НАДЯ.** А? Кам тăратрĕ мана? Кам манпа калаçрĕ? Кам мана «хĕрĕм» терĕ? Ăçта эпĕ?
**ЛИДЯ.** Хĕрĕм, ача валли ĕмкĕчĕ тума пĕремĕк пар-ха. *(Çухалать.)*

**НАДЯ.** Халех. Халех, анне. *(Кĕсьинче тем шырать.)* Кĕсьере те ним те çук. Мĕнле астăваймарăм-ха эпĕ? Халех, анне.

*Надя кайма тăрать, ăна хирĕç Валерапа Таня килеççĕ.*

**ВАЛЕРА.** Надя, акă асанне парса ячĕ. *(Аллинчи тĕркине парать.)*
**НАДЯ.** Пар кунта хăвăртрах. *(Тĕркине салтса çимĕçсем кăларать те вилтăпри çине хурать.)* Анне, акă сан валли кучченеç, тутлăхлă пул. Акă ачу валли пĕремĕк.
**ВАЛЕРА.** Надя, эсĕ чирлемен-и?
**НАДЯ.** Туй кĕрекинче лармаллаччĕ те вĕт, пулмарĕ. Анне-е-е... *(Йĕрет.)*
**ВАЛЕРА.** Надя, ан йĕр, масар çинче йĕме каламаççĕ. Атя киле каяр.
**НАДЯ.** Анне, эсĕ пирĕн пĕрре çеç, чи юратни, чи хакли. Эпир сана никампа та улăштармăпăр. Эсĕ ĕмĕрех пирĕн асра пулăн.

*Аякран Зина килет, вăл салху, çав тери ывăннă сăнлă. Таняна курсан, пĕр самант хытса тăрать, аллинчи сумки çĕре ӳкет. Вĕсем пĕр-пĕрин çине пĕр хушă пăхса тăраççĕ те пырса ыталанаççĕ.*

**ТАНЯ.** Анне... Анне!
**ЗИНА.** Таня, хĕрĕм...
**ТАНЯ.** Тинех эс килтĕн иккен, тинех эс пирĕнпе, анне.
**ЗИНА.** Хĕрĕм, Танюша... Ӳссе кайнă эсĕ, хĕр пулнă. Пĕчĕккисем мĕнле унта? Аçу мĕнле?
**ТАНЯ.** Пурте чиперех, пурте сана кĕтетпĕр. Анчах та мĕншĕн эсĕ автобуспа тӳрех яла каймарăн? Мĕншĕн кунтан, тавра çулпа килетĕн?
**ЗИНА.** Эпĕ мĕн-ха... Хамăр таврана тунсăхласа çитрĕм, курса çаврăнам, терĕм. Эсĕ вара кунта мĕн тăватăн?
**ТАНЯ.** Эпĕ туйа килтĕм.
**ЗИНА.** Туйа? Ют ял масарĕ çине-и?
**ТАНЯ.** Çук ĕнтĕ, яла. Манăн тантăш, Надя, паян качча тухать, эпĕ унăн хĕр çумĕ. Туй киличчен амăшĕн тăпри çине килсе каяс терĕç те, мана та илсе килчĕç.

ЗИНА *(Валерапа Надя кам тăпри çинче тăнине пăхса).* Лидян хĕрĕ качча тухать-и?
ТАНЯ. Аха. Эсĕ унăн амăшне пĕлнĕ-и?
ЗИНА. Аха, кăштах.
ТАНЯ. Надясен мăнакăшĕ, Веракка, эсĕ ăна лайăх пĕлнĕ терĕ.

*Валерапа Надя вĕсем патне пыраççĕ.*

ВАЛЕРА. Ырă кун пултăр. Таня, кайрăмăр.
ТАНЯ. Тăхта. Акă паллашăр, ку манăн анне пулать.
ВАЛЕРА. Сывлăх сунатăп сире.
ЗИНА. Тавтапуç.
ВАЛЕРА. Ну, пирĕн каймалла. Атя, Таня, е эсĕ...
ЗИНА. Çук, çук... Сирĕнпех пырать вăл. Пыр, хĕрĕм, кай.
ТАНЯ. Анне...
ЗИНА. Килте калаçăпăр. Ут, ут, ан юл вĕсенчен.
ТАНЯ. Юрĕ, ан çилен мана.
ЗИНА. Утăр, утăр. Эпĕ те кăштах ларса канатăп та килелле утатăп.

*Çамрăксем каяççĕ. Зина вĕсене куçпа ăсатса ярать те Лидян виттăпри патне пырать, чĕркуççи çине ӳкет.*

ЗИНА. Лидя, каçар мана, йăнăшпа пулчĕ вăл. Эпир вĕлерес темен сана. Вĕлерес темен... Вĕлерес темен... *(Выртса йĕрет.)*

*Çутă сӳнет.*

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

3 КАРТИНА. ***Пĕрремĕш картинăри курăну. Кĕтерукпа Вера ним чĕнмесĕр сĕтел патĕнче ĕçлесе çӳреççĕ. Кĕтерук хушăран куçне шăлса илет. Коляпа Марье шавласа кĕреççĕ.***

КОЛЯ. Ăçта вĕсем? Мĕн шыв сыпнă пек тăратăр, кĕтмерĕр-и эпĕ каялла таврăнасса? Ниçта та каймастăп эпĕ, ак çакăнта ларатăп та хускалмастăп. Ăçта ачасем? Эпĕ вĕсене халех тĕрĕсне каласа паратăп. Мĕн, хĕре парса та ятăр-и ĕнтĕ? Анне, ăçта Надюшпа Валерка?
КĔТЕРУК. Аннĕне виличчен тата мĕн кăтартса хăварам-ши тетĕн-и? Чĕрĕллех чуна кăларса илетĕн вĕт, ачам.

КОЛЯ. Ăçта ачасем?
КĔТЕРУК. Амăшĕн тăпри çине кайрĕç. Лăплан, туй киличчен выртса кан.
КОЛЯ. Эсир кунта мана юри лăплантарса ан тăрăр. Ман вĕсене амăшĕ мĕнле вилни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа памалла. Капла мĕнле пулса тухрĕ-ха? Ним калаттармасăр мана кăларчĕç те ячĕç, çын вĕлерекен те хам пулса юлтăм. Эпĕ вĕлермен Лидяна, эпĕ таса çын. Чи айăпли кунта...
МАРЬЕ. Куля, мĕн пулнă сана паян? Килтен тухнă чухне те урса тухрăн, кунта та урса çеç тăратăн. Унччен кун пек марччĕ-çке эсĕ. Мĕн уртарать сана? Ăшна шуйттан кĕрсе ларнă пуль санăнне, турра асăн-ха хăть.
КОЛЯ. Çук, Марье, вĕсем эпĕ кайсан савăнса çеç юлаççĕ, çавăнпа хăваласа кăларса ячĕç те мана. Ниçта та каймастăп эпĕ. Кунта халлĕхе эпĕ хуçа, манăн кил ку, ман атте çурчĕ.
КĔТЕРУК. Аçун çурчĕ тахçанах ишĕлсе аннă, ав. Аçуна хунă çав эсĕ, вăл ĕмĕр чуна илсе пурăнатчĕ, халь эсĕ. Ун усаллăхне çĕнтерес тесе хам та хаярлансах пытăм, кашкăрпа кашкăрла пулма тăрăшрăм. Хаярлăха пула кине те вăхăтĕнче шелле пĕлмерĕм. Халь, ак, чавса çывăх та, çыртма çук.
КОЛЯ *(кантăкран пăхса).* Ав, çитрĕç. Атя кĕрĕр-кĕрĕр пӳрте. Аçăр начар тетĕр пуль те, кунта аçăртан начаррисем те пур-ха. *(Верана.)* Ну, мĕн, чĕтрене ере пуçларăна? Ха-ха-ха! Çавă кирлĕ сана!
ВЕРА. Манăн хăраса пĕтнĕ, эпĕ Лидя умĕнче те, ачасен умĕнче те таса.
КОЛЯ. Кăна вара суятăн. Эсир суйнипех ун чухне мана милицие тытса кайрĕç те, Лидяна пытарма та ямарĕç. Ун чухне мана çын вĕлерекен турăр, халь ун пек тăваймăр. Халĕ эпĕ сире суд тăватăп.
МАРЬЕ. Куля, лăплан-ха, туй иртсе кайтăр-ха, ытти пирки кайран калаçăн.
КОЛЯ. Лидя вăл «ытти» мар, вăл манăн арăм, ман ачасен амăшĕ. *(Валерапа Надя тата Таня кĕреççĕ.)* Атя, кĕрĕр, кĕрĕр.
Ак çакăнта иртсе ларăр. Валерка, эсĕ те лар. *(Таняна.)* Эс вара? Пирĕн пата килсен сан питӳ пĕрре те хĕрелмест-и, пĕр-пĕрчĕ те намăсланмастăн-и эсĕ?
НАДЯ. Асанне, мĕн калаçать вăл?

**ВАЛЕРА.** Ан тĕкĕннĕ пултăр ăна. Таня, тархасшăн, леш пӳлĕме кай-ха.

**КĔТЕРУК.** Урăх чухне калаçсан юрамасть-и-ха кун çинчен?

**ТАНЯ.** Ан чарăр ăна! Эпĕ туятăп вăл мĕн каласса. Калатăр, пĕтĕмпех калатăр. Хамăр çинчен хăть те мĕн илтсен те, эпĕ чăтăп. Кăшкăрса ярас патне çитсен те кăшкăрмăп, тăнран тухас патне çитсен те хама хам хытарăп. Ан чарăр ăна, манăн та тĕрĕсне пĕлес килет. Çитет суккăрла пурăнса.

**ВАЛЕРА.** Атте, пĕр сăмах кăна кала...

**КОЛЯ.** Эс мĕн, унăн амăшĕпе тăванлашасшăн мар пуль те? Е хăвна çуратса янă аннӳнтен те хаклăрах-и сана çав çын вĕлерекен?

*Валера Коляна кăкăртан ярса тытать, ыттисем ăна чараççĕ.*

**ВАЛЕРА.** Вăл çын вĕлерсе тĕрмене лекмен! Эсĕ ху çын вĕлерекен!

**КĔТЕРУК.** Валерка, ывăлăм, ху çине çылăх ан ил. Чарăнăр, ачамсем!

**ВАЛЕРА.** Асанне, ылтăнăм, тавтапуç сана пире пăхса ӳстернĕшĕн, пăрахманшăн. Эсĕ пирĕншĕн яланах анне вырăнĕнче пулнă. Чĕрĕ атте пур çинче çеç эпир аттесĕр ӳснĕ. Эпĕ аннерен çулталăкра кăна юлнă, ун чухне мĕн пулса иртнине пĕлместĕп, анчах та пĕтĕм чун-чĕрепе туятăп анне вилнĕшĕн айăпли эсĕ пулнине. *(Коля çине кăтартать.)*

**ВЕРА.** Вăл çав, тата кам пултăр. Лидяна пĕтĕм çын юрататчĕ, аçу ăна ĕçлĕхрен кăларчĕ. Мĕн пĕлсе сана качча кайрĕ-ши, мĕншĕн пирĕн сăмаха итлемерĕ? Пĕтертĕн Лидяна, эсех пĕтертĕн, кĕрӳ. Эсĕ ăна йĕркеллĕ усранă пулсан, хырăмне те пăрахма шутламан пулĕччĕ. «Акка, тек вăл килте тӳссе пурăнаймастăп, хырăма пăрахатăп та ачасене илсе тĕнчене тухса каятăп»,- терĕ.

**КОЛЯ.** Эсĕ савăнса юри ăна кĕпесем улăштарса тăхăнтартса кăларса янă. Пĕлсе тăрса ма кăларса ятăн ăна çавăнта? Эпир çапăçаттăмăрччĕ те пуль, мирлешеттĕмĕрччĕ те пуль. Мĕншĕн пирĕн хушша тăтăн? Антив пăрахтăр хырăмне, мĕншĕн пульницана илсе каймарăн? Мĕншĕн тутар карчăкĕ патне кăларса ятăн ăна?

ВАЛЕРА. Анне больницара вилмен-и вара? Ăçта вилнĕ вара вăл?
ВЕРА. Пульницара ачана халь тин пăрахтармаççĕ, вăхăт иртнĕ, кая юлтăм, терĕ. Вăл карчăк патне каякансем сахал мар, Зина та темиçе те пулнă, терĕ. Пĕри те вилсе таврăнман, ма Лидя тĕлне çавăн пек пулчĕ-ши?
КОЛЯ. Тата çитменнине упăшки вĕлернĕ тесе ят сараççĕ. Эпĕ, имĕш, çул çинче сыхласа тăнă та вĕсем Хуракатаран килессе, кайран, Зина иртсе кайсан, Лидяна ыраш хушшине илсе кĕрсе вĕлернĕ. Ăна эпĕ вĕлермен, ачамсем, эпĕ вăл кун кункаçа вăрманта пулнă, кӳршĕсем валли вутта кайнăччĕ. Аннĕре хырăм пăрахтарнă чухне Хураката карчăкĕпе Зина вĕлернĕ. Кайран, хăйсенчен сирес тесе, виллине çĕр варринче Хуракатапа Пашъел хушшине, ыраш ăшне кăларса пăрахнă. Эпĕ вĕлермен ăна, сан аннӳ илсе кайса вĕлернĕ ăна. *(Таня енне кăтартать.)*
НАДЯ. Анне-е-е...

*Таня сасăсăр кăшкăрать. кайран çаврăнать те тухса каять.*

МАРЬЕ. Эй, Турă, амăшĕшĕн хĕрĕ айăплă мар та çав. *(Таня хыççăн тухать.)*
КОЛЯ. Ун чухне укçа чышса тĕрмерен хăтăлса юлчĕ, веçех карчăк çине йăвантарчĕ. Кайран, ав, вăрăпа та пулин тĕрмене лекрĕ, хăрах куçне те çухатрĕ. Этем судĕнчен хăтăлма пулать, турă судĕнчен хăтăлма май çук. Ун умĕнче пĕтĕм çылăхсемшĕн явап тытмалла пулать. Турă вăл веçех курать, веçех илтет.
ВАЛЕРА. Мăнакка, эпир халь илтни тĕрĕс-и?
ВЕРА. Тĕрĕс. Анчах та Зинапа Лидя ачаран пĕрле ӳснĕ. Вĕлерес тесе те вĕлермен пуль, мĕн-тĕр йăнăш тунă пуль. Кайран хăраса ӳкнĕ те, ним тăвайман енне аçăр çине йăвантарнă. Вĕсем çапăçса пурăннине пурте пĕлнĕ, вăл аннĕре капла та темиçе хут вĕлерме тытăннă. «Пĕр енчен хăй, тепрĕр енчен амăшĕ мана туласа пурăнаççĕ»,- тетчĕ. Вăл тутар карчăкĕ те мар, Зина та мар, Лидян пуçне çиекенĕ эсĕ, кĕрӳ.
КОЛЯ. Вăт сана – ме!
ВЕРА. Пашъел сĕтĕрĕнчĕкĕ те, пекарнăй сĕтĕрĕнчĕкĕ тесе иккĕнлетсе хăртаççĕ, тетчĕ. Çывăрма та çӳçенмесĕр çывăраймастăп, тетчĕ. Хырăмри ачана та йышăнмасть, тетчĕ.

Манран мар вăл ачу, Петĕртен тесе калать, тетчĕ. Килнĕрепе хăвна тӳрре кăларассишĕн тăрăшатăн, ачасен умĕнче таса пулса юлассу килет. Тĕп айăпĕ хăвăнта пулнине йышăнма хăяймастăн.
ВАЛЕРА. Атте, тухса кай кунтан. Эсĕ пирĕн атте мар.
КОЛЯ. Маттур, маттур, çынна тухрăр. Илтрĕн-и, анне, мăнуку мĕн калаçать? Мана ашшĕ вырăнне хумасть. Мĕн пĕлсе çуратса янă вара эпĕ сире? Камшăн нушаланнă çак таранччен? Уйăхĕ-уйăхĕ ютра плотникра çӳреттĕм, тăван килсĕр, ачасемсĕр, мăшăрсăр. Мĕн чухлĕ сывлăха пĕтермен эп сирĕншĕн. Халĕ çакăн пек тав тăватăр-и аçăра? Тавтапуç хисеп тунăшăн.
ВАЛЕРА. Çапла, ĕçлесе килеттĕн те, аннĕр вилнĕшĕн хурланса тесе мĕн ĕçлесе илнине ик-виçĕ кун хушшинче ĕçсе яраттăн. Пире пĕр сандали е пĕр кĕпе илсе параттăнччĕ ĕнтĕ, тавтапуç. Ыттисене вара пĕтĕмпех Настю çине тăккалаттăн. Эрни-эрнипе ун патĕнчен тухма пĕлместĕнччĕ, пĕр ялта пурăнса та пире килсе те пăхмастăнччĕ. Пĕрре Надя питĕ хытă чирлесе ӳкнĕччĕ, асанне те таçта кайнăччĕ ун чух. Эпĕ, ниçта кайса пĕлменрен, сан пата пулăшу ыйтма чупса пытăм. Эсĕ сиксе тухрăн пăлтăрне, ху çаппа-çарамас. Мана кансĕрлесе çӳренĕшĕн вăрçса кăларса ятăн. Эпĕ çĕр варринче йĕре-йĕре кӳршĕ яла фельдшер патне чупрăм. Ют çынсем тăван аттерен ытларах пулăшу пачĕç пире. Халĕ ӳстертĕм, çын турăм, тетĕн. Килнĕренпе кашни сăмах çумне чĕрре кĕрсе пыратăн вĕт ху. Мĕнле шутпа килсе кĕтĕн эсĕ кунта: хĕр пама-и е пирĕн чуна кăларса илме? Йăнăшатăн, атте, эсĕ ман чуна кăларса илеймĕн. Хытнă вăл, чулран та хытăрах хытнă. Пурнăç хытарнă ăна, атте-аннесĕр ӳсни хытарнă, çак çуртра мĕн ачаран мăн арçын вырăнне пилĕк авни хытарнă. Эсĕ ăна кăларса илеймĕн. Малтан эпĕ санăн чунна кăларса илетĕп.
ВЕРА. Хăçан та пулин харкашмасăр пурăнни пулнă-ши çак çуртра?
КĔТЕРУК. Вале-е-е... *(Тĕшĕрĕлсе анать.)*
НАДЯ. Асанне! Мĕн пулчĕ, асанне?
ВАЛЕРА. Асанне...

*Надяпа Валера Кĕтерука тăратса сакă çине лартаççĕ.*

КОЛЯ *(Валерана).* Сан ĕçӳ ку, эсĕ ăна çакăн патне илсе çитертĕн. Туй вырăнне виле пытармалла пулать, ак.
ВЕРА. Шыв... Шыв памаллаччĕ. *(Тепĕр пӳлĕме каять.)*
КĔТЕРУК *(вăйсăррăн).* Чĕре чиксе кайрĕ. Начук, хĕрĕм, сан туйу кунне çеç вилсе выртас марччĕ.
НАДЯ. Асанне, ан вил. Ан вил, асанне. Сансăр пурăнаймастпăр эпир.
ВЕРА *(куркапа шыв илсе килет).* Тăхлачă, шыв сып-ха пĕр çăвар та пулин.
КĔТЕРУК *(шыв ĕçнĕ хыççăн).* Ачамсем, ман пурăнасси нумаях юлмарĕ. Паян сывă, ыран тепле. Хăть мĕнле пулсан та, Куля, ачусене ан пăрах. Вĕсемпе харкашса-вăрçăнса пурăнмалла мар санăн, вĕсене пурнăç тума ăс парса пымалла. Шел, эпĕ хăй вăхăтĕнче сана ăс парса çитерейменрĕм пулас. Чыса çухатма йывăр мар, чыса тума йывăр. Этем питне ан çухат, кашкăр пичĕпе çынсем хушшинче пурăнаймăн. Ачусене пăх, лайăх-и, япăх-и – вĕсем санăн, сан тĕпренчĕкӳсем. Çавăтса кайăр мана вырăн çине.

*Надяпа Валера Кĕтерука тепĕр пӳлĕме илсе каяççĕ. Коля та вĕсем хыççăн каять. Урамран Марье хыпăнса кĕрет.*

МАРЬЕ. Куля! Вера! Тухăр-ха кам та пулин. Унта Таня чирлесе ӳкнĕ. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп.
ВЕРА. Ăçта вăл?
МАРЬЕ. Пусма çинче. Кăмăл пăтранать, пуç çаврăнать, тет. Мĕн тăвар-ши, тĕтĕрсе пăхар-ши? Тен çын çилли ӳкнĕ?

*Урама тухма тăраççĕ, вĕсене хирĕç Таня кĕрет. Тепĕр пӳлĕмрен Надяпа Валера тухаççĕ.*

ТАНЯ. Эп айăплă мар... Эп айăплă мар. Эп айăплă мар! *(Хăраса каялла чакать.)*
ВАЛЕРА. Таня...
ТАНЯ. Эпĕ санран мĕншĕн ютшăннине пĕлесшĕнччĕ эсĕ. Халь пĕлтĕн-и ĕнтĕ?

*Урамра туй çывхарса килни илтĕнет. Коля тепĕр пӳлĕмрен тухать.*

ВЕРА *(кантăкран пăхса).* Туй килет. Туй килет!
МАРЬЕ. Куля, ачасене тек ним те ан кала, хĕр илсе тухса кайиччен чăт. Атту çын умĕнче аван мар.
КОЛЯ. Хамăнне хамах пĕлетĕп эпĕ, вĕрентсе ан тăр.
НАДЯ. Туй килет...
ВАЛЕРА. Атте, пирĕн те ытти ачасем пекех йĕркеллĕ авланса, йĕркеллĕ качча каяс килет. Хĕпĕртесе, атте-аннене хисеп туса. Пӳртри шăкăр-макăра тула кăларар мар, атте.
КОЛЯ. Юрĕ, атя алă парар та иксĕмĕр шаклаттарса пĕрер черкке ӳпĕнтерер.
ВАЛЕРА *(алă парса).* Алă паратăп, анчах та халлĕхе ĕçместĕп, туй халăхне пăхмалла.
МАРЬЕ. Начук, кĕпӳне тăхăнмаллаччĕ, çывхараççĕ, ав.
НАДЯ. Вĕсем малтан машинипе кăшкăртса иртсе каяççĕ-ха. Алеша: «Сана илме пынă чух пĕтĕм ял витĕр сасă парса çаврăнатăп»-, терĕ.
МАРЬЕ. Пурпĕрех тăхăнса тăмалла. Таня, пулăш атя.
НАДЯ *(туй кĕпине илсе саркаласа пăхать).* Пăх-ха, ниçта та ним те çипăçман-и унта?
КОЛЯ *(черккесене хĕрлĕ эрех тултарса).* Валеркăн, тĕрĕс, çын пăхмалла. Акка, кил , эппин иксĕмĕр мирлешсе ĕçер.
ВЕРА. Ĕçместĕп эпĕ.

*Коля тулли черккипе Вера енне çаврăннă чухне, ăнсăртран эрехне хĕр кĕпи çине тăкать.*

НАДЯ. Атте, ну мĕн туса хутăн-ха ĕнтĕ? Шăлт халĕ ĕçмеллеччĕ-и санăн? Каймасть вĕт ку.
КОЛЯ. Каçар, хĕрĕм, асăрхаймарăм.
ВАЛЕРА. Ларт черккӳне!
КОЛЯ. Каçар терĕм-çке.
НАДЯ. Хăçантанпа кĕтрĕм эпĕ çак кĕпене тăхăнас тесе, куç шăрçи пек упрарăм. Пурпĕр туй кĕрекинче таса кĕпепе ларасси пулмарĕ. *(Йĕрет.)*
ТАНЯ. Ан йĕр, Надя, атя мĕнпе те пулин тасататпăр.

*Туй шавĕ пӳрт умнех çитет.*

**ВЕРА.** Çитрĕç.

**МАРЬЕ** *(кантăкран пăхса).* Чарăнмарĕç-ха, иртсе кайрĕç. Тасатăр атя, ĕлкĕретĕр-ха. Туй килсен те сире тӳрех кĕрекене лартмаççĕ.

*Надяпа Таня тепĕр пӳлĕме каяççĕ.*

**КОЛЯ.** Çут эрехпе сăтăрмаллаччĕ, каять.

**ВЕРА.** Чĕнмесĕр тăрасчĕ хăть. Туй кĕпине варалама юраманнине пĕлетĕн-и эсĕ?

**ВАЛЕРА** *(кантăкран пăхса).* Мĕншĕн тип çырма енне кайрĕç-ха вĕсем, унта кĕперĕ япăх-çке. Çыранĕ те ишĕлнĕ, иртсе çӳреме тăвăр.

**КОЛЯ.** Ан хăра, туй машинине Федя тытнă, вăл ас-водитель.

**ВАЛЕРА.** Ĕçтертĕн вĕт эсĕ ăна. Килĕнче те ĕçнĕ пулсан ас-водитель пулать вара.

*Сасартăк туй шавĕ шăпланать, аякра хаяррăн çухăрса яни илтĕнет, кăшкăрашу-çуххашу. «Мĕн пулчĕ» тесе пурте кантăк патне чупса пыраççĕ, анчах та лерен ним те курăнманнипе пĕр-пĕрин çине ăнланмасăр пăхса илеççĕ. Тепĕр пӳлĕмрен Надяпа Таня тухаççĕ.*

**ВАЛЕРА.** Вăт сана – ас-водитель. *(Урама чупса тухса каять.)*

**НАДЯ.** Мĕн пулчĕ вара?

**МАРЬЕ.** Нимĕн те пулман пуль-ха. Валерка пĕлсе килет, ак.

**НАДЯ.** Унта кăшкăраççĕ.

**МАРЬЕ.** Эсĕ ан пăлхан, веçех лайăх пулать, ак. Унччен, Чĕмпĕре кайнă чух, пирĕн автобусăн урапи шăтрĕ те, кĕтмен çĕртен сасартăк тăп! чарăнчĕ. Пурте хăранипе çари çухăрса ятăмăр. Кусен те çавăн пек урапи шăтнă пуль.

**ВЕРА** *(Коляна).* Каларăм сана, ялан пырна тăрантаймастăн.

**НАДЯ.** Хăратăп эпĕ, унта Алеша пур. Эй, турăçăм, инкек кăна ан яр пирĕн çине.

**МАРЬЕ** *(Коляна).* Чӳк юпи пек хытса тăриччен санăн та кайса пăхмаллаччĕ.

**КОЛЯ.** Пиншака ниçтан тупаймастăп-ха.

**НАДЯ.** Эпĕ кун пек хăраса кĕтсе тăраймастăп, атьăр кайса пăхатпăр.

МАРЬЕ. Лăплан, веçех лайăх пулать, ак. Ан хуйхăр. *(Ирĕксĕр кулараx.)* Урапине часах сапласа пĕтерейместĕ-ха вĕсем. Ак Алеша лаша кӳлсе килет те, сана трантаспах илсе каять. Вăт тĕлĕнтермĕш пулать.
НАДЯ. Мĕншĕн никам та килмест-ха вăл енчен?
КОЛЯ. Пăрăн-ха эсĕ те пулин!

*Коля кумса çӳренĕ чух Таняна чышса ярать, леш сĕтел кĕтессине хырăмĕпе пырса тăрăнать те кăшкăрса ярса кукленсе ларать. Тепĕр пӳлĕмрен Кĕтеруk тухать.*

ВЕРА. Мĕн туса хутăн эсĕ? Мĕнпе айăпа кĕчĕ вăл сан умăнта? Çӳретĕн çиллӳне ниçта шăнăçтараймасăр.

*Урамран Валерка кĕрет.*

ВАЛЕРА. Надя... *(Пуçне усать.)*

*Надя урай варрине йăванса каять.*

КĔТЕРУК. Этем тени ахальтен урмасть çав вăл, инкеке сиссе урать.

***Çутă сӳнет.***

4 КАРТИНА. *Çавăнтах, туй сĕтелĕсем кăна çук. Ирхине, хĕвел тухас умĕн. Марье вутă çĕклемĕ илсе кĕрет. Кĕтеруk тĕпелтен тухать.*

МАРЬЕ. Анне, мĕншĕн халех тăтăн? Выртмаллаччĕ тата кăштах.
КĔТЕРУК. Выртни мĕн усси, пурпĕр пĕр чĕптĕм те çывăрасси пулмарĕ. Пуçри шухăшсем ыйха веçех сирсе яраççĕ.
МАРЬЕ. Икĕ кун хушшинче веçех хуралса лартăн.
КĔТЕРУК. Хуйхă ырă тумасть çав вăл, кин. Чирлесе выртиччен вилсе кăна выртасчĕ те вĕт... Пирĕн вырăна, ав, çамрăксем вилсе выртаççĕ. Виçĕмкун вилетĕпех пуль тенĕччĕ, çук вĕт, юлтăм. Турри мана юри вилĕм памасăр асаплантарать пуль. Çылăхăм пысăк çав ман, çылăхăм пысăк. Шеллемерĕм Лидя кине хăй вăхăтĕнче. Элек сăмах итлесе тем те каласа хăртаттăм ăна, Куляна та каласа параттăм. Çавна пула ялан вăрçăнатчĕç, çапăçатчĕç. Çынна сывă чухне упрамалла çав

ӑна. Мана чӑтаймасӑрах тухса кайнӑ ӗнтӗ вӑл ун чух. Кули те тата... Лайӑх пурӑннӑ пулсан савӑнса кӑна ача ҫуратнӑ пулӗччӗ. Хам ҫума та усал ҫулӑхнӑ пулнӑ пуль ҫав.

**МАРЬЕ.** Сан ҫылӑху каҫарӑннӑ ӗнтӗ вӑл. Унӑн икӗ ачине мӗн пӗчӗкрен пӑхса ҫитӗнтернӗ, ав.

**КӖТЕРУК.** Ҫылӑх каҫманнинчен те хӑрамастӑп эпӗ; ачасем ҫех халӗ, тӗрӗссине пӗлнӗ хыҫҫӑн, манран ютшӑнасран хӑратӑп. Ашшӗпе иксӗмӗре ҫиленсе килтен тухса каясран хӑратӑп. Эпӗ паянхи пек хуҫӑлса юлӑп. Ни сывӑ юлаймӑп, ни вилеймӗп. Ҫӑвар ӑшӗ типсен пӗр курка шыв ӑсса паракан та пулмӗ. Ватлӑх кунра темле нушаллӑ пурӑнсан та, хам ҫине алӑ ҫӗклес килмест, турӑ вилӗмӗпех вилес килет. Куля ҫумӗнче шанчӑк ҫук, вӑл мана пӑхас ҫук. Тӑман-и-ха вӑл?

**МАРЬЕ.** Ҫук.

**КӖТЕРУК.** Валеркапа иккӗшне шӑтӑк чавма ямалла пулать, атту аван мар.

**МАРЬЕ.** Валерка вӗсем патне кайрӗ. Начука киле илсе кил терӗм, атту икӗ талӑк куҫ хупман вӗт, мӗскӗн. Тупӑкӗ патӗнчен пӗр шит те пӑрӑнмасть, теҫ. Ҫамрӑклах ун пуҫӗ ҫине мӗн пысӑкӗш хуйхӑ йӑтӑнса анчӗ. Эх, анчах! Кӗрӗвӗ ҫине пӑхма та хӑрушӑ, хӑрах куҫне уҫса выртать.

**КӖТЕРУК.** Эй, Турӑ! Вилнӗ ҫын куҫне уҫса выртни аван мар. Тепӗр виле ан пултӑрах.

**МАРЬЕ.** Куляна тӑратам-ха. *(Тепӗр пӳлӗме кӗрсе каять.)*

**КӖТЕРУК** *(турӑш умне тӑрса кӗл тума тытӑнать).* Эй, мухтавлӑ Турӑ! Ҫӗр ҫинче пур ырлӑх та санран тухать, чӗрӗлӗх те эсӗ паратӑн. Нумай пурӑнтӑм, нумай ҫылӑха кӗтӗм пуль ку таранччен. Сана асӑниччен ытларах усала асӑнтӑм пуль. Эй, Турӑ, хӑвӑн аслӑ ырлӑхупа хӗрхенсем пире, пирӗн вӑйсӑрлӑха килсе тӳрлет, хӑвӑн вӗҫӗмсӗр ырӑ кӑмӑлупа эпӗ усал ӗҫ тунине каҫарсам. Эпир ӗҫпе, сӑмахпа, шухӑшпа е пӗлсе, е пӗлмесӗр ҫылӑха кӗнине пурне те каҫар. Ӳтӗмӗрсенӗн, чунӑмӑрсенӗн ирсӗрлӗхне пурне те тасат. Ҫак ҫуртра инкек-асап нумай пулнӑ, савӑнӑҫран ытларах куҫҫуль тӑкӑннӑ. Эй, Святой Сывлӑш, ҫак ҫурт ӑш-чиккине те, пирӗн ӑша та кӗрсе вырнаҫ, пур усалтан та тасат пире. Эй, Турӑ, манӑн ачасене, ачан ачисене, тӑван хурӑнташсене, тус-йышӑмӑрсене пурне те ҫӑл, ҫырлах. Ку тӗнчере те, леш тӗнчере те ырӑ курмалла ту вӗсене. Мухтав Ашшӗне, ывӑлне, Святой сывлӑшне, халӗ те, кирек хӑҫан та

ĕмĕр-ĕмĕрех, амин. (Турăш çинчен таса шыв илсе пӳртăшчиккине пĕрĕхсе тухать.)

*Тепĕр пӳлĕмрен Коляпа Марье тухаççĕ.*

КОЛЯ. Кăшт та канма памаççĕ. Хĕвел тухиччен мĕн пĕлсе тăратрăн мана? Капла та йĕркеллĕ çывăраймарăм. Çĕрĕпе анне ахлатса выртрĕ, Валерийĕ тата тĕттĕм пӳртре каллĕ-маллĕ кумрĕ, ирех эсĕ кĕмсĕртетсе çӳретĕн. Хăйсен ыйхи çук та, çынна та çывăрма памаççĕ.
КĔТЕРУК. Арăму кăмака хутса пĕтерет, сана та ăна пулăшсан юратчĕ. Пĕр витре шыв кĕртсе парсан та усă.
КОЛЯ. Пурпĕр спасибо калакан пулмасть. Ав пулăштăр, ахламон. Сан çурту мар тет вĕт. Ун çурчĕ пулсан хăй ĕçлетĕр, манăн кунта ĕç пĕтнĕ. Виле куçĕ хытă тенипе çеç пытармасăр каяс мар терĕм.
КĔТЕРУК. Хуйхă та сан кăмăлна улăштармарĕ иккен.

*Валеркапа Надя килеççĕ. Надя хура тутăр çыхнă. Вăл пĕтĕм вăйне пухса Коля çине сиксе ӳкет.*

НАДЯ. Çын вĕлерекен! Шуйттан! Чунилли!
ВАЛЕРА *(чарса).* Надя...
НАДЯ. Ан чарăр мана! Алешана эсĕ вĕлертĕн, сана пула вилсе выртрĕ вăл. Мĕншĕн шоферне эрех ĕçтертĕн, эпĕ телейлĕ пуласран хăрарăн-и? Аннене те эсех вĕлернĕ! Çын вĕлерекен эсĕ, атте мар!
КОЛЯ. Çапла, эпĕ сан аçу мар, манăн хĕр мар эсĕ. Тасал ман çумран! *(Надяна чышса ывăтать.)*
КĔТЕРУК. Куля, мĕн калаçатăн эсĕ?
КОЛЯ. Алеша вилсе тĕрĕс тунă, эсир пурĕпĕр телейлĕ пулаймастăрччĕ. Мĕншĕн тесен эсир Алешапа иксĕр те пĕр аттерен.
ВАЛЕРА. Мĕн? Мĕн терĕн эс?
КĔТЕРУК. Ку тĕрĕс мар!
КОЛЯ. Мана качча киличчен вĕсем Петĕрпе туслă пулнă, икĕ çул пĕрле çӳренĕ. Ĕненместĕп эпĕ аннӳ мана качча киличчен хĕрлĕхне çухатманнине. Вăл кунта киличченех арăм пулнă.

**КĔТЕРУК.** Суять вăл, ан ĕненĕр ăна. Вăл хăй мĕн каланине хăй те пĕлмест.
**КОЛЯ.** Пăхăр-ха эсир ун çине, пирĕнни нимĕн те çук ун сăнĕнче.
**КĔТЕРУК.** Çук, вăл пирĕн енне хунă.. Çураласса та Начук кин килсен çулталăк иртсен çеç çуралчĕ.
**КОЛЯ.** Вăл ман хĕр мар, Валерка çеç манран. Начук манран мар, Петĕртен вăл.

*Надя тăнсăр пулса ӳкет.*

**ВАЛЕРА.** Надя...
**МАРЬЕ.** Начук!
**ВАЛЕРА.** Мĕн туса хутăн эсĕ?! *(Коляна çапас пек тăрать.)*
**КĔТЕРУК** *(Валерана пӳлсе).* Валери, çав ирсĕр çине алă çĕклесе çылăха ан кĕр. *(Коляна.)* Эсĕ вара халех тухса кай кунтан. Тухса кай пирĕн çуртран.

*Валера Надяна йăтса тепĕр пӳлĕме илсе каять.*

**КОЛЯ.** Эсĕ те мана хăвалатăн, анне. Тăван килтен хăвалатăн. Мĕншĕн, тĕрĕсне каланăшăн-и?
**КĔТЕРУК.** Мĕн тĕрĕсси унта! Эсĕ хушăн çеç тăрăшатăн. Эпир сана кирлĕ мар, нихăçан та кирлĕ пулман. Валерка тĕрĕс munkaларĕ: ку сан çурту мар, кин тăрăшнипе çĕкленсе ларчĕ вăл. Мĕнле йывăр пулсан та, вăл пурăнасах тенĕ, çавăнпа çурта çĕклерĕ те. Кин пулман пулсан паянхи кун та аçун çуртĕнче пурăннă пулăттăмăр. Никама та юратмастăн, никама та шанмастăн. Тухса кай! Куç курми тухса кай!

*Тепĕр пӳлĕмрен Валерка тухать.*

**КОЛЯ.** Атя, Марье, кайрăмăр, эпир кунта никама та кирлĕ мар.
**МАРЬЕ.** Мана та кирлĕ мар эсĕ тек. Ăçта пурăнас тетĕн, çавăнта пурăн, хам киле эпĕ сана текех кĕртместĕп. Начукпа Валеркана йышăнатăп, Лидя вырăнĕнче пулса вĕсене пăхăп. Эсĕ мана тек кирлĕ мар. Мана хуçалăхра пулăшнинчен ытларах чуна уçса пама юлташ кирлĕччĕ.
**КОЛЯ.** Мĕнле-ха капла, манăн ăçта пурăнмалла тет вара? Тăван килтен хăвалаççĕ, эсĕ хăвалатăн. Мĕн турăм эп сире

мана йытта хăваланă пек хăвалама? Эсир пурте манăн вилĕме кĕтетĕр. Юрĕ, нумай тарăхтарса тăмăп, халех тухса çакăнатăп. Тепĕр виле пытарăр. Виле пытарма маçтăр эсир. Ăçта вĕрен? Ăçта вĕрен? *(Тухса каять.)*

ВАЛЕРА. Çакăн, тахçанах çакăнмалла сан.

МАРЬЕ *(хăраса).* Çакăнĕ те вăл, унран веçех кĕтме пулать. Валерка, тухса чар-ха, çакăнать вĕт.

ВАЛЕРА. Çакăнать, асту. Малтан пире пурне те çакса тухать-ха вăл.

МАРЬЕ. Эх, пурнăç... *(Тухса каять.)*

*Кăшт тăрсан Таня кĕрет, вăл чирлĕ сăнлă.*

ВАЛЕРА *(тĕлĕнсе).* Таня? Мĕншĕн эсĕ кунта, мĕншĕн больницара мар?

ТАНЯ. Валера, пирĕн ача... Çук вăл текех. *(Йĕрет.)*

ВАЛЕРА. Сан температура пысăк. Ма сана халех больницаран кăларса янă?

ТАНЯ. Эпĕ унтан тухса тартăм.

ВАЛЕРА. Тартăн?

ТАНЯ. Эпĕ унта тăма пултараймастăп, унта пĕтĕм стенасем ача сассипе калаçаççĕ. Ăçта пыратăн, унта ача сасси, чĕрене çурса ярасла сасă. Вăл сасă халĕ те хăлхаран кая пĕлмест. Ах, Валера...*(Йĕрет.)*

ВАЛЕРА. Ан йĕр, Таня. Пирĕн тата та ачасем пулĕç, нумай-нумай ача. Çуралас текенсем пурте çуралса пырĕç. Эпĕ юрататăп сана, эпир телейлĕ пулăпăр. Пирĕн шăпа урăхла пулĕ, аттепе аннесенни пек мар. Çак пурнăçра пире мĕн чухлĕ хурлăхпа асап уйăрса панă, пĕтĕмпех тӳссе ирттертĕмĕр пуль ĕнтĕ эпир. Урăх терт курмалли юлмарĕ пуль ĕнтĕ, телей курмалли çеç юлчĕ пуль.

ТАНЯ. Кăна пĕр Турă çеç пĕлет.

ВАЛЕРА. Эсĕ вăйсăр, атя выртса кан. *(Тепĕр пӳлĕме илсе каять.)*

*Коляпа Марье кĕреççĕ.*

КОЛЯ. Çакăнмастăп та, тумастăп та! Сире савăнтарма çакăнмалла-и ман? Эпĕ вилсен эсир пĕри те пĕр тумлам куççуль кăлармастăр, пĕлсех тăратăп. Эпĕ ухмах мар-ха

сирĕншĕн вилсе выртма. Хăвăр тухса çакăнăр, вĕрен хатĕр. Мана пурнăç йăлăхтарса çитермен. Ан кĕрт! Эс кĕртмесен тепри кĕртет, тĕнчере пĕччен хĕрарăмсем сахал мар.
МАРЬЕ. Веçех ăсран тайăлнă иккен эсĕ.

*Зина кĕрет, вăл хыпăннă. Тепĕр пӳлĕмрен Валера тухать.*

ЗИНА. Пирĕн Таня кунта килнĕ терĕç. Ăçта вăл?
КОЛЯ. Ха! Курăр-ха кам килчĕ. Арăма вĕлерни çитмест, тата пĕр вăтанмасăрах пирĕн пата та килме пултарать вĕт-ха вăл. Сан пĕрре те питӳ хĕрелмест-и çак пӳрте ура ярса пуссан?
ЗИНА. Эпĕ сан патна килмен, Таняна шыраса килтĕм, пульницаран тухса тарнă терĕç те. Эпĕ ăна ниçта та тупаймарăм, вара сирĕн пата килтĕм. Пĕр-пĕрне тем пекех кураймасан та, пирĕн çулсем каллех пĕрлешрĕç. Ăçта Таня? Е Лидяшăн ман вырăна ăна тавăрасшăн-и? Ăна ан тĕкĕн, мана тавăр. Акă эпĕ кунта, сан умăнта. Мĕн тăвас тетĕн, çавна ту.
КОЛЯ. Вăл кунта! Вăл пирĕн патăмăрта! Эпĕ вара ăна нимĕн те тумастăп: вăрçмастăп та, хĕнеместĕп те, кăларса та ямастăп. Шуйттан пуль эсĕ!
ЗИНА. Эпĕ пĕлетĕп, эсир мана кураймастăр. Анчах малтан, пурте кунта чухне, Лидя юлашкинчен мĕн каласа хăварнине калам. Çапла, эпĕ ун чухне тĕрмерен хăтăлса юлтăм. Ачасем ытла та пĕчĕкчĕ, вĕсене хамăнах пăхса çитĕнтерес килчĕ. Çавăнпа чăнлăха суйса кăтартрăм. Кайран пурпĕрех унта лекрĕм. Çук, вăрланăшăн мар, турри Лидяшăнах тĕрме тутине тутантарчĕ мана. Анчах эпир ăна вĕлерес темен. Вĕлерме мар, Хуракатана та илсе каясшăн марччĕ эпĕ ăна, çуратмах ӳкĕтлерĕм. Вăл çинех тăчĕ: «Ку ача çуралсан та телейлĕ пулмасть, Коля йышăнмасть ăна. Çурат кăна, ачупа иксĕре те вĕлеретĕп. Манран мар вăл, Петĕртен тесе каларĕ»,- терĕ. Эпĕ вара илсе кайрăм. Эпир ăна вĕлерес темен, йăнăшпа пулчĕ вăл. Эпĕ юратнă Лидяна. Эпĕ ăна вĕлерме пултарайман.

*Тепĕр пӳлĕмрен Таня тухать.*

КОЛЯ. Ку хĕр татах кунта-и?

*Коля Таняна çапма тăрать, анчах Валера ăна маларах çапса ярать. Коля урайне ӳкет.*

ТАНЯ. Анне!..
ЗИНА. Таня, хӗрӗм...
КӖТЕРУК. Ҫын пулаймарӑн иккен эсӗ, Куля. Таса шыв пӗрӗхемха хӑть ху ҫине, ӑшунтан усалусем тухса кайччӗр. *(Коля ҫине таса шыв пӗрӗхет.)*
КОЛЯ. Ҫап, ҫап, Валерка, тата хытӑрах ҫап мана. Вӗлериччен ҫап, шӑм-шаксем ванса пӗтиччен ҫап мана. Ҫын вӗлерекен ҫине пӑхнӑ пек кӑна ан пӑхӑр ман ҫине. Сирӗн куҫӑрсем мана чӗрӗлле шӑтӑка чикеҫҫӗ. Ухмах эпӗ, ухмах. Ачасене те пӑхаймарӑм, аннене те пулӑшаймарӑм. Камшӑн пурӑннӑ вара эпӗ ку таранччен, мӗнле тӗллевпе пурӑннӑ? Ӗҫлемесӗр те пурӑнман вӗт-ха. Ӗҫлесе илнӗ укҫа ӑҫта кайса пӗтнӗ вара манӑн? Эрех ҫине-и, Настя ҫине-и? Ӑҫта манӑн пурлӑх? *(Ҫийӗнчи тумтирне силлет.)* Ҫакӑ ҫеҫ-и? Упраймарӑм Лидяна. Мана пулах ҫӗре кӗчӗ вӑл. Эпӗ ырӑ пулнӑ пулсан, Хуракатана та каймасчӗ вӑл. Ҫап, Валерка, ҫап, хӗне мана. Эсӗ хӗнесен чуна ҫӑмӑлрах пулӗ. Аннӗр вӑл таса ҫынччӗ, унран таса ҫын ман тӗле урӑх пулман. Юратнӑ эпӗ ӑна, ҫав тери юратнӑ. Ун ҫине пурте ӑмсанса пӑхатчӗҫ, ҫавӑнпа кӗвӗҫеттӗмччӗ те. Кам та пулин ӑна мухтанине илтсен, ун ҫумне кӗвӗҫеттӗм; кампа та пулин юнашар утнине курсан – ун ҫумне; кӳршӗ-аршӑ каҫсан – вӗсем ҫумне. Анне, каҫар мана, ачасене ӳстернӗ чух пӗтӗм йывӑрлӑх сан ҫине ӳкрӗ, пулӑшаймарӑм сана. Настяпа ҫыхланса кайрӑм та, ӗҫке ертӗм. Тавах Марьене, вӑл мана ҫын ҫине кӑларчӗ, пӗтме памарӗ. Валерка, ывӑлӑм, каҫар мана. Сан ку килте ачаллах ӗҫе кӳленмелле пулнӑ. Надюш, хӗрӗм, ӑҫта эсӗ? *(Тепӗр пӳлӗмрен Надя тухать, вӑл хӑйне ӑнланмалла мар тытать.)* Начук, чӗппӗм, каҫар мана. Эсӗ манӑн хӗр, манӑн.
НАДЯ. Кун пуҫланать, хӗвел тухать, пӗтӗм ҫутҫанталӑк вӑранать. Эй, тӗнче, мӗн тери илемлӗ эсӗ! Эпӗ вара ҫывӑрса выртатӑп. Асанне, мӗншӗн мана тӑратмарӑн эсӗ? Ҫӗнӗ кун пуҫланнӑ чухне ҫывӑрса выртма юрать-и вара? Асанне, паян мӗнле кун? Эпӗ питӗ нумай ҫывӑрнӑ пулас, кун йӗркине те манса кайнӑ.
КӖТЕРУК. Тунтикун, хӗрӗм.
НАДЯ. Тунтикун? Ҫитес шӑматкун манӑн туй-ҫке, мана Алеша качча илсе каять. Унччен пилӗк кун ҫеҫ юлчӗ. Таня, манӑн хӗр ҫумӗ пулатӑн-и? Ма тӗлӗнсе пӑхатӑр эсир ман ҫине, хуйха ӳкрӗр-и? Кӗҫех эпӗ качча каятӑп, сиртен уйрӑлатӑп.

КĔТЕРУК. Начук, эсĕ хăвна лайăхах туятăн-и, нимĕн те ыратмасть-и санăн?
НАДЯ. Çук, асанне, эпĕ сып-сывă. Нихăçанхинчен те лайăх мана. Туй кĕпи ăçта-ха манăн? Сире тăхăнса кăтартасшăнччĕ эпĕ. Мĕн тери хитре кĕпе туянса пачĕ мана Алеша. *(Тепĕр пӳлĕме каять.)*
ВАЛЕРА. Мĕн пулнă ăна, асанне? Вăл ним те астумасть. Алеша вилни çинчен те манса кайрĕ-и вара вăл? Хăратăп эпĕ, асанне. Мĕн пулнă ăна?
КĔТЕРУК. Хам та тĕлĕнетĕп. Эх, ачамсем... *(Йĕрет.)*
НАДЯ *(туй кĕпине тăхăнса тухать).* Акă, килĕшет-и? Çак кĕпепе эпĕ Алешасен килне каятăп. Асанне, эсĕ мĕншĕн йĕретĕн, эпĕ качча кайнипе-и? Ан йĕр, эпĕ сан патна килсех çӳрĕп. Ĕмĕрлĕхех уйрăлмастпăр-çке.
ВАЛЕРА. Надя...
НАДЯ *(Валерана).* Эсĕ Таняна ан кӳрентер, лайăх хĕр вăл. Ăнах качча ил, телейлĕ пулăн. Тăрăр-ха, тăрăр юнашар. *(Валерапа Таняна юнашар тăратать.)* Ой, мĕн тери хитре мăшăр. Çапла-и, асанне? Сирĕн телей куç умĕнчех. Анчах та телей вăл кайăк-хур карти пекех: пĕрре килет те, тепре каять. Кайран татах килет, унтан каллех хурлăхпа ылмашăнать. *(Валерана.)* Эсĕ ма тĕлĕнсе пăхатăн ман çине, ман хитрелĕхпе киленетĕн-и? Качча кайнă чух арăму та çакăн пек кĕпепе пулĕ. Асанне, манăн питĕ çиес килет. Мĕн те пулин пар-ха мана çимелли.
КĔТЕРУК. Яшка пиçсе ĕлкĕреймерĕ пуль-ха. Вăртах сĕт каçарса панăччĕ, савăтĕ тĕпелте ларать. Валерка, илсе кил-ха.

*Валера каять те кружкăпа сĕт илсе килет, Надяна парать.*

НАДЯ. Тавтапуç. *(Сĕтне ĕçсе янă хыççăн.)* Ой, мĕнле тутлă. Кун пек тутлă сĕт эпĕ нихăçан та ĕçмен пулĕ. *(Теме тăнласа.)* Ой, шăнкăрав сасси! Ку Алеша пуль-ха, мана илме килет. Сана пар лашапа, трантаспа илме килетĕп, терĕ. Ма халех килет-ха вăл? Паня тунтикун çеç-çке, пирĕн туй шăматкун пулать. *(Татах тăнласа.)* Ав, юрласах килет. Асанне, итле-ха, мĕнле хитре юрлать вăл. Ку унăн чи юратнă юрри.
КĔТЕРУК. Хĕрĕм, эсĕ аташатăн пуль, нимле сас та çук-çке. Паянхи кун кам юрлатăр.

НАДЯ *(тăнласа).* Ача йĕнĕ сасă. Асанне, итле-ха, ача йĕрет. Тата такам сăпка юрри юрлать. Валерка, илтетĕн-и?
ВАЛЕРА. Çук.
НАДЯ. Мĕнле нимĕн те илтместĕр-ха эсир? Хытах юрлать-çке. Ачи те йĕрет, выçнă пуль ĕнтĕ. Сĕте те ĕçсе ятăм. *(Пурне те пăхса çаврăнса.)* Эпĕ халех... Эсир çакăнтах юлăр, ниçта та ан кайăр. Эпĕ халех...

*Надя тухса каять. Пурте ним ăнланмасăр хытса юлаççĕ.*

***Çутă сӳнет.***

## ЭПИЛОГ.

***Масар çинчи çĕнĕ вилтăпри. Надя килет.***

НАДЯ. Акă, Алеша, эпĕ çитрĕм те. Эсĕ мана кĕтсе ывăнтăн пулĕ, хам та тунсăхласа çитрĕм. Паян масар хуралне тухмаллине манса каймарăн-и-ха? Каç пулать вĕт, тух, иксĕмĕр хурал тăрăпăр. Кайран, ман черет çитсен, эсĕ мана хурал тăма пулăшăн, юрĕ-и? Эпир ĕмĕрех пĕрле пулăпăр.

*Каччă ĕмĕлки курăнса каять, вăл шап-шурă тумпа. Надя ăна курмасть пулсан та, вăл юнашар пулнине туять; каччă ăçталла чĕнет, çавăнталла утать. Вĕсем çухалаççĕ.*

***Çутă сӳнет.***

**Вĕçĕ.**

1993 çул.

Угарин Николай Васильевич
У-24 Крик ребенка из бездонной колыбели. Драма.
Шемурша. 2002г. – 40 стр.